Библиотека им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 3 кĕçнерникун № 2 (8654)

Хакĕ 20 пус. 34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

И. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ Кииси Ивамото господин патне янă телеграмма (1 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Я. Сигаев.—Критикăпа самокритикăна вăйлатмалла; О. Калинина.—Пропагандистсен семинарĕ (2 стр.).
А. Жирков.—Массăсем хушшинче ĕçлесси—парти работникĕн тивĕçĕ (2 стр.).
МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫЧĔПЕ ПАЛЛАШТАРАТПĂР. Кашни сурăхран 5 килограмм çăм (2 стр.).
П. Соловьев, В. Васильев.—Институтри кружоксем (2 стр.).
ВАРМАН ХАТЕРЛЕВĔ: К. Наманган.—Малтанхи çуна çулĕпе (3 стр.).
БИБЛИОГРАФИ: Н. Любимов.—Чăваш литературин хрестоматийĕ (3 стр.).
Н. Егоров. — Шкул ачисен хĕллехи каникулĕ (3 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Н. Минин.—Çĕнĕ çул кунĕ Шупашкарта (4 стр.).
Культурăллă пурнăç хроники (4 стр.).

Учительсен январьти канашлăвĕсем

Совет халăхĕ çĕнĕ çула хуçалăхпа культура строительствинче пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕ. Иртнĕ çулта халăха вĕрентес ĕçре те паллă çитĕнÿсем тунă. Пирĕн çĕршывра пурне те обязательнăй йĕркепе çичĕ çул вĕрентес тĕлĕшпе йышăннă закон ăнăçлăн пурнăçланса пырать.

Совет шкулĕ—тĕнчере чи малта пыракан шкул, чăн-чăн халăх шкулĕ пулса тăрать. Шкулшăн, учительшĕн пирĕн çĕршыври пек хытă тăрăшни капитализмлă çĕршывсенче ниçта та çук. Совет учителĕсем хушшинче юлашки çулсенче педагогика ĕçне лайăх пĕлекен çынсем нумай ÿссе çитĕнчĕç Вĕсем ачасене çирĕп те тарăн пĕлÿ параççĕ. Вĕсен класĕсенче икшер çул пĕр класра ларакансем пулмаççĕ. Çавăн пекех пирĕн вĕренÿ ĕçне лайăх йĕркеленĕ шкулсен хисепĕ те çултан-çул ÿссе пырать. Лайăх ĕçлекен шкулсен, учительсен опытне пропагандăламалли чи лайăх майсенчен пĕри вăл—учительсен çулсеренех ирттерекен канашлăвĕсем пулса тăраççĕ.

Учительсен çак кунсенче пулса иртекен канашлăвĕсенче районти тата хулари сутĕç пайĕсем 1951—1952-мĕш вĕренÿ çулĕн малтанхи çур çулĕнче тунă ĕçсен итогĕсем çинчен каласа параççĕ. Канашлусене политикăпа идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттересси кун йĕркинче тăракан ыйтусене тĕплĕн сÿтсе явнинчен, канашлусенче критикăпа самокритикăна анлăн сарнинчен килет.

Сутĕç пайĕсен заведующийĕсем хăйсен доклачĕсенче шкулсенче вĕрентÿпе воспитани ĕçне мĕнле йĕркеленине кăтартакан цифрăсене, çак ĕçре малта пыракан шкулсемпе учительсене асăннипех иртсе кайма пултараймаççĕ. Районта е хулара шкулсенчи вĕрентÿпе воспитани ĕçĕн пахалăхне ÿстерес тĕлĕшпе мĕнле çитĕнÿсем тунине, вăл çитĕнÿсене мĕнле майпа, мĕнле меслетпе тунине, шкулсен ĕçĕнче мĕнле ситменлĕхсемпе йăнăшсем пуррине, ĕçри çитменлĕхсем мĕнле сăлтавсемпе пулма пултарнине докладчикăн тĕплĕн сутатса парас пулать.

Пирĕн шкулсен ĕçĕнчи паллă çитменлĕх вăл—вĕренÿре ăлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ пысăк пулни. Пĕр класрах икĕ çул ларассине пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр кĕрешни пулать. Сĕнтĕр районĕнче, сăмахран, юлашки çулсенче пĕр класрах икшер çул ларакансен хисепĕ чакас вырăнне ÿссе пыни палăрать. Нумай шкулсенче вырăс чĕлхипе математика предмечĕсем тăрăх вĕренÿре ăлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ пысăк.

Сталин юлташăн «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» ятлă произведенийĕ пичетленсе тухни пирĕн шкулсене чĕлхене вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме май пачĕ. Сталин юлташ вĕрентĕвне тĕп никĕсе хурса ĕçлени совет учителĕсене вĕрентÿ ĕçĕнче пысăк çитĕнÿсем тума пулăшать. Анчах хăшпĕр районти тата хулари сутĕç пайĕсем, шкул руководителĕсемпе учительсем чĕлхене вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелесе çитерне тесе хăйсене хăйсем лăплантарма пăхаççĕ. Ку вăл пысăк йăнăш туни пулать. Тĕрĕссипе илсен, чĕлхене вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелесси чылай шкулсенче халĕ те çителĕксĕр пулса пырать.

Красноармейски районĕнчи Яманакри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн V—VII-мĕш классенче вĕренекенсем вырăсла начар пĕлеççĕ. Кунти преподавательсем вĕренекенсен сăмах пуянлăхне ÿстерме тăрăшмаççĕ. Чăваш чĕлхипе кунта Т. Ильин учитель вĕрентет. Вăл çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче те чылай вăхăт хушши кивĕ орфографипе усă курнă. Унăн урокĕсем кичем иртеççĕ. Вăл ачасене илемлĕ литературăпа интереслентермест, çавăнпа унăн вĕренекенĕсем илемлĕ литература кĕнекисене сахал вулаççĕ.

Çакăн пек çитменлĕхсем районти ытти шкулсенче те палăраççĕ. Кушкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулта IV-мĕш класра СССР историне вĕрентес ĕçе начар йĕркеленĕ. Учитель вĕренекенсенчен ыйтусем тăрăх тĕплĕ ыйтмасть, ачасене хăй вĕрентекен предметпа интереслентермест, уроксенче наглядлăй пособисемпе усă курмасть. Тепĕр чухне учитель хăй те йăнăшсем тăвать: Куликово хирне вăл Днепр шывĕ таврашĕнче шырать.

Шкулти вĕрентÿпе воспитани ĕçĕн пахалăхĕ, чи малтан, учительтен килет. Хăйĕн ĕçĕнчи ответлăха туйса ĕçлекен, хăйĕн пĕлĕвне ялан ÿстерсе пыракан учителĕн ĕçĕнче вĕрентÿпе воспитани ĕçĕ ăнăçлă пулса пырать. Акă, Калинино районĕнчи Хăмăшри çичĕ çул вĕренмелли шкулта ватă, опытлă учитель Г. Куликов юлташ ĕçлет. Унăн урокĕсем наукăпа идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра тăраççĕ. Хăйĕн предметне вăл лайăх пĕлет, методика кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа пырать. Çавăнпа ачасем вăл вĕрентекен предмета юратаççĕ, урокра яланах пысăк активлăх кăтартаççĕ.

Лайăх ĕçлекен учительсен опычĕпе паллаштарасси учительсен çитес канашлăвĕнче пысăк вырăн йышăнма тивĕç. Лайăх ĕçлекен шкулсем тата учительсем вĕренÿ пахалăхне мĕнле майпа ÿстерсе пыраççĕ, пĕр класрах икшер çул ларакансен хисепне мĕнле чакараççĕ, малтан вĕреннине аса илтерес ĕçе мĕнле йĕркелеççĕ—çак ыйтусем çине канашлу участникĕсем тивĕçлĕ ответ илме пултарччăр.

Шкулсенчи вĕрентÿпе воспитани ĕçĕн ăнăçлăхĕ вĕренекенсем хушшинчи дисциплинăна çирĕплетсе пынинчен нумай килет. Юлашки вăхăтра хăшпĕр шкулсенче, уйрăммăнах арçын ачасен шкулĕсенче дисциплинăна пăснисем палăраççĕ. Вĕренекенсем хăйсене мĕнле тытмалли çинчен йышăннă йĕркене чылай чухне пăхăнманни пулкалать. Шкулсенчи дисциплинăна çирĕплетес, шкул ачисем хушшинче воспитани ĕçне вăйлатас пирки учительсен канашлăвĕсенче тимлĕн сÿтсе явмалла пулать. Воспитани ĕçне лайăх йĕркеленĕ çĕрте вĕренекенсем хушшинчи ăнланулла дисциплина та çÿлĕ вырăнта тăрать.

Учительсен канашлăвĕнче сÿтсе явмалли иккĕмĕш ыйту вăл—ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсем. ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн пленумĕ пионер организацийĕсен ĕçĕнчи пуян опыта пĕтĕçтерчĕ. çав вăхăтрах ку ĕçри çитменлĕхсене палăртса хăварчĕ Пионер дружинисен тата отрячĕсен ĕçĕ тĕп задачăна—шкулсенчи вĕренÿ ĕçĕн пахалăхне ÿстерес тата вĕренекенсен хушшинчи дисциплинăна çирĕплетес ĕçе пăхăнса тăмасть. Пионер организацийĕсене шкулсенчи комсомол организацийĕсем кирлĕ пек ертсе пымаççĕ. çак ĕçре шкул руководителĕсемпе учительсем те тимлĕ пулăшмаççĕ Паллах, шкулсенчи пионер организацийĕсен ĕçĕнче те паха опытсем пур. Унпа тĕплĕн паллаштарасси учительсен канашлăвĕ умĕнче тăракан паллă задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Ку ыйту тăрăх докладчиксен канашлура учительсене ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсем çинчен каласа панипе пĕрлех, пионер организацийĕн ĕçне лайăх йĕркеленĕ шкулсен опычĕпе паллаштарас пулать. Малта пыракан шкулсенче учительсем пионер вожатăйĕсене мĕнле майпа пулăшса пыни çинчен, Тăван çĕршыва вĕренес, партипе правительствăн çулпуçĕсен—В. И Ленин тата И. В. Сталин пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе паллашас, Тăван çĕршывăн паллă çыннисен ĕçĕсемпе паллашас тĕлĕшпе сборсем мĕнле ирттерни çинчен докладчиксен конкретнăй примерсем илсе каласа памалла.

Совет учителĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Ачасене коммунистла воспитани парса хăюллă патриотсем пулма вĕрентесси, вĕсене хамăрăн халăха хисеплесе юратма вĕрентесси, совет халăхĕн паттăр ĕçĕсемпе хĕпĕртесе савăнма вĕрентесси—çаксем вĕсем пурте учительсем умĕнче тăракан задачăсем. Шкул ачисене Тăван çĕршыва юратма вĕрентесси, вĕсене советлă общество тата государство стройĕ ытти стройсенчен малта тăнине кăтартса парасси, коммунистсен партийĕн тата унăн çулпуçĕсен Ленинпа Сталинăн историллĕ пысăк ĕçĕсене кăтартса парасси, хамăр Тăван çĕршыв патриочĕсем пулма вĕрентесси—совет шкулĕн тĕп задачисем пулса тăраççĕ.

Учительсен январьти канашлăвĕсем шкул коллективĕсене умра тăракан задачăсене пурнăçлас ĕçе анлă мобилизацилеме пулăшĕç. Партин хула комитечĕсемпе райкомĕсен учительсен канашлăвĕсенче ыйтусене тĕрĕс лартса сÿтсе явма, канашлусене ĕçлĕхлĕ, политикăпа идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра, критикăна самокритикăна анлă сарнă никĕс çинче ирттерме пулăшмалла.

Учительсем, çитес канашлусенче хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене тимлĕн тишкерсе тухса, умри задачăсене ăнăçлă пурнăçламалли майсене татăклăн кăтартса парĕç. Совет учителĕсем кăçалхи вĕренÿ çулĕн юлашки çур çулĕнче вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнче татах та пысăкрах çитĕнÿсем тăвассишĕн большевикла хастарлăхпа кĕрешĕç.

И. В. Сталин Сочиненийĕсен 7-мĕш томĕ таджикла пичетленсе тухнă

СТАЛИНАБАД, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Таджик ССР государство издательстви И. В. Сталин Сочиненийĕсен 7-мĕш томне таджикла куçарса пичетлесе кăларнă.

Ăна вырăсларан Таджик чĕлхи çине ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Маркс—Энгельс—Ленин институчĕн Таджик республикинчи филиалĕ куçарса хатĕрленĕ.

ТОКИО

Киодо агентствин главнăй редакторне Кииси Ивамото господина

Хисеплĕ господин К. Ивамото!

Эсир Япони халăхне çĕнĕ çул ячĕпе послани яма ыйтса çырнине эпĕ илтĕм.

Совет деятелĕсен урăх государствăн премьерĕ тепĕр государство халăхĕ патне ырă сунса çыру ямалли йăла çук. Анчах, Японие ют çĕршыв оккупациленĕ пирки инкеке лекнĕ Япони халăхне Совет Союзĕнчи халăхсем тулли кăмăлпа хисепленĕ май, манăн çав йăларан пăрăнма тивет, Сирĕн ыйтăва тивĕçтермелле пулать.

Япони халăхне çакăн çинчен пĕлтерме ыйтатăп: эпĕ ăна ирĕклĕхпе телей сунатăп, хăйĕн тăван çĕршывĕ никама пăхăнмасăр пурăнмалла тăвассишĕн хăюллă та хастарлă кĕрешÿре ăнăçлăх пултăр тесе ырă сунатăп.

Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсем те иртнĕ вăхăтра ют çĕршывсем, çав шутра Япони империалисчĕсем те хутшăнса оккупациленинчен йывăр хĕн-хур тÿссе курнă. Çавăнпа та вĕсем Япони халăхĕ мĕнле хĕн-хур тÿссе пурăннине лайăх ăнланаççĕ, ăна чĕререн шеллеççĕ тата вăл хăйĕн тăван çĕршывне, хăй вăхăтĕнче Совет Союзĕнчи халăхсем пекех, çĕнĕрен çĕклентерме тата никама пăхăнмасăр пурăнмалла туса хума пултарассине шанса тăраççĕ.

Японири рабочисене ĕçсĕрлĕхрен тата ĕçшĕн сахал тÿлениниченх хăтăлма, халăха куллен кирлĕ таварсен пысăк хакĕсене пĕтерме тата мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçре ăнăçлăх тума ырă сунатăп.

Японири хресченсене çĕр çуккинчен тата çĕр сахаллинчен хăтăлма, пысăк налогсене пĕтерме тата мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçре ăнăçлăх тума ырă сунатăп.

Японин пĕтĕм халăхне тата унăн интеллигенцине Японири демократиллĕ вăйсем пĕтĕмпех çĕнтерессине пурнăçлама, çĕршыври экономикăллă пурнăçа вăйлатса çĕклентерме, наци культурине, наукине, искусствине чечеклентерме тата мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçре ăнăçлăх тума ырă сунатăп.

Хисеплесе

И. СТАЛИН.

1951 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Лăпкă океан çинче

ВЛАДИВОСТОК, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ТАСС корреспонденчĕ, инçетре ишсе çÿрекен пăрахутсен экипажĕсемпе радио тăрăх çыхăнса, вĕсем 1952 çула мĕнле çитĕнÿсемпе кĕтсе илни çинчен ыйтса пĕлнĕ.

«Родина» пăрахут капитанĕ Ткачев юлташ çапла пĕлтернĕ: пăрахут команди навигаци планне ноябрĕн 7-мĕшĕнче тултарнă. 1951 çулта юлашки рейс туса Инçет Хĕвелтухăçĕнчи портсене планран ирттерсе пиншер тонна груз илсе пынă.

— Иртнĕ çулта,—тесе каланă «Рига» пăрахут капитанĕ Герасименко юлташ янă телеграммăра,—пирĕн пăрахут команди пăрахута яланах лайăх пăхса усрама социализмлă обязательство илчĕ. Моряксем çул çинче пынă чухне тата портсенче тăнă чухне те пăрахута хăйсен вăйĕпе юсарĕç. Пăрахут виççĕмĕш çул ĕнтĕ юсав ĕçне тума чарăнмасăр ĕçлет.

Звенигородски МТС (Киев облаçĕ) комбайнерĕ Социализмлă Ĕç Геройĕ И. И. Швец хăйĕн комбайнне яланах юсавлă тытма социализмлă обязательство илнĕ. Тĕштырăсене пухса кĕртнĕ хыççăн комбайна хĕллехи вырăна лартнă, ăна мастерскойра юсамалла пулман.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. И. Швец юлташ хăйĕн комбайнне пăхса тухать.

Н. КРЫЛОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Колхозлă ял пуянланса пырать

Ставрополь крайĕнчи ялсенче 1951 çулта çĕнĕ ĕçсем нумай пулса иртрĕç. Ново-Александровски районти Григорополисская станица хальхи вăхăтри пек пуян пулни ĕлĕк нихçан та пулман. Кунти Сталин ячĕпе тăракан колхоз çулталăкра 5 миллион тенкĕ яхăн тупăш илнĕ, ку вăл иртнĕ çулхинчен 2,5 хут нумайрах пулать. Колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 4-шар килограмм тулă валеçсе панă. 50 колхозник иртнĕ çулта çĕнĕ çуртсем лартнă.

Черкес автономиллĕ облаçĕнче 3 пысăк гидроэлектростанци туса лартнă. Черкеси халĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех электрификациленĕ область пулса пырать.

Колхозниксемпе механизаторсем тăрăшса ĕçленипе колхозсен пуянлăхĕ, вĕсен пайланман фончĕсем ÿссе пыраççĕ, колхозлă ялта культура çĕкленсе пырать. Крайри колхозсем нумайăшĕ кашни гектартан 100-шер пăт ытла тырă пухса кĕртнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, общественлă хуçалăхăн ытти отраслĕсене вăйлатса пысăк тупăш илнĕ. Миллионер-колхозсен шучĕ иртнĕ çулта 2,5 хут ÿснĕ. Халĕ ĕнтĕ крайри кашни икĕ колхозран пĕри миллионер пулса тăнă. (ТАСС).

„Караваево“ совхозра

«Караваево» совхоз коллективĕ ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем туни çинчен пĕлтернĕ. Совхозра 300 ĕне сăваççĕ. Сăвакан кашни ĕнерен 6.392 килограмм сĕт суса илнĕ. Ĕнесенчен илекен тупăш вăрçă умĕнхи вăхăтринчен чылай иртнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана совхоз ирттерсе тултарнă. Çавăн пекех совхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана срокчен тултарнă.

Ĕне сăвакансен ăмăртăвĕнче Социализмлă Ĕç Геройĕ Смирнова юлташ малта пырать. Вăл хăй пăхакан кашни ĕнерен вăтам шутпа 8.200 килограмм сĕт суса илнĕ.

«Караваево» совхозра ĕçлекенсем сĕт питĕ нумай паракан ĕнесем пăхса ÿстернĕ. «Гроза» ятлă ĕнене пиллĕкмĕш çул сунă. Вăл çулталăкра 16.502 килограмм сĕт панă.

Çĕнĕ çул кунĕ Мускавра

Çĕнĕ çул ячĕпе салам! Çĕнĕ çул кунĕнче театрсемпе культура дворецĕсенче, клубсенче, урамсенче, метрора—пур çĕрте те çак ăшă сăмахсемпе саламласа калани илтĕнсе тăчĕ. Мускаври ĕççыннисем, пĕтĕм совет çыннисемпе пĕрле, 1952 çул пуçланнине савăнăçлă кĕтсе илчĕç.

Столица урамĕсенче кунĕпех халăх нумай пулчĕ. Мускаври нумай ĕççыннисем çĕнĕ çул ячĕпе ирттернĕ концертсемпе спектакльсенче пулчĕç. Музейсене пиншер çын пырса курчĕç. Вĕсем Мускав хулин историне тата хулана çĕнетсе лайăхлатнине кăтартса паракан музейра çĕнĕ çуртсен макечĕсемпе тата ÿкерчĕкĕсемпе паллашрĕç. Третьяковски галлерейăра 1951 çулхи Пĕтĕм Союзри художество выставки уçăлнă. Галлерея залĕсенче халăх питĕ нумай пулчĕ. Галлерейăна курма пынă çынсем живопись, скульптура тата графика произведенийĕсене, совет çыннисен мирлĕ ĕçне кăтартса паракан произведенисене интересленсе пăхрĕç.

Шкул ачисем çĕнĕ çул кунне савăнăçлă ирттерчĕç. Театрсенче, культура дворецĕсемпе клубсенче шкул ачисене валли утренниксем ирттерчĕç. Çĕнĕ çул ёлкисене питĕ чаплă илемлетнĕ.

Мускаври нумай ĕççыннисем çĕнĕ çул кунĕнче хавасланса ĕçлерĕç: «Серп и молот» заводри металлургсем хурçă шăратса кăларчĕç, Сталин ячĕпе тăракан автозаводри конвейерсем пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕç, çÿлĕ çуртсене тăвакансем те ĕçре пулчĕç.

1952 çул пуçланнă кун хаваслă иртрĕ. Совет халăхĕ çĕнĕ çĕнтерÿсем патне çирĕп утăмпа утса пырать. Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр И. В. Сталин юлташ çул кăтартса пынипе совет халăхĕ коммунизм строительствинче. пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешес ĕçре çĕнĕ çĕнтерÿсем туса пырĕ. (ТАСС).

Ленинградри ĕççыннисем çĕнĕ çула ĕçри пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илнĕ

Ленин хулинчи предприятисенче çĕнĕ çул умĕн иртнĕ çулталăкри ĕç итогĕсене пăхса тухнă. Ленинградри ĕççыннисен ĕç итогĕсем питĕ чаплă! Сталин ячĕпе тăракан металлически заводри стахановецсем шыв вăйне ĕçлекен турбинăсем, 1950 çулхипе танлаштарсан, виçĕ хут нумайрах туса кăларнă. Çĕнĕ çул умĕн завода Цимлянски гидроузелтан телеграмма килнĕ. Заводăн шеф-монтажникĕ Сталинла премии лауреачĕ И. В. Орлов Цимлянски гидроэлектростанцие тунă çĕрте турбинăна хăвăрт пухса пĕтерессишĕн тăрăшса ĕçлеме пуçлани çинчен пĕлтерет. Ленинградран аслă стройкăна кайнă юлташсем машинăсене срокчен пухса пĕтерсе ĕçе кĕртме тăрăшса ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çĕнĕ çул умĕнхи кунсенче Сталин ячĕпе тăракан паротурбинăсем тăвакан заводра уйрăмах пысăк çĕкленÿпе ĕçленĕ. Кунта 150 пин киловатт хăватлă турбина пухаççĕ. Ку вăл тĕнчере халиччен пулман пысăк турбина. И. В. Аловаев ертсе пыракан электросварщиксен бригади, çĕнĕ çул умĕн питĕ пысăк хастарлăхпа ĕçлесе, хăватлă турбина пайĕсене срокчен пилĕк кун малтан туса пĕтернĕ. Кун пек тĕслĕхсем заводра нумай. Заводри 70 стахановец 1951 çулта 2 çулхи нормăран пуçласа 4 çулхи нормăна çити тултарнă.

Ленинградри нумай ĕççыннисем çĕнĕ çула çĕнĕ хваттерсенче кĕтсе илчĕç. Çĕнĕ çул умĕн 116 хваттерлĕ çĕнĕ çурт туса пĕтернĕ. Иртнĕ çулталăк хушшинче Ленинградра нумай хутлă çуртсем 350 туса лартнă. Çуртсене газ кĕртекенсем 80 километр тăршшĕ çĕнĕ магистральсем тунă. Ленинградра çĕнĕрен 23 пин хваттере газ кĕртнĕ. (ТАСС).

Çĕр кăмрăк промышленноçĕ государство планне тултарнă

СССР Çĕр кăмрăк промышленность министрĕ А. Засядько юлташ СССР Министрĕсен Совечĕн Председательне Иосиф Виссарионович Сталин юлташа рапорт панă. Рапортра декабрĕн 29-мĕшĕнче çĕр кăмрăк промышленность министерствин шахтерĕсем государствăн çĕр кăмрăк кăлармалли 1951 çулхи планне тултарни çинчен пĕлтернĕ.

Плана срокчен тултарма шахтăсенчи йывăр ĕçсене механизацилесе пыни тата ĕçе лайăх организацилени пулăшнă.

1951 çулта çĕр кăмрăкĕ кăларнă çĕрте кашни рабочин ĕç тухăçлăхĕ вăтам шутпа 1950 çулхинчен 7,6 процент ÿснĕ.

Чугун çул транспорчĕ çулталăкри плана срокчен тултарнă

СССР Çул-йĕр министрĕ Б. Бещев юлташ Совет Союзĕнчи железнодорожниксем Çул-йĕр министерствине 1951 çулта грузсем тиеме государство кăтартса панă плана срокчен тултарни çинчен СССР Министрĕсен Совечĕн Председательне Иосиф Виссарионович Сталин юлташа пĕлтернĕ.

Чугун çулсем грузсем турттармалли вагонсен çаврăнăшне хăвăртлатмалли, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли, локомобильсем топливо расходланине чакармалли тата грузсем турттарма ларакан хака чакармалли задание ирттерсе тултарнă.

Чугун çулсем, çулталăкри плана тултарнă хыççăн, планран ирттерсе халăх хуçалăхне валли кирлĕ грузсем, вăл шутра çĕр кăмрăкĕ, тимĕр тăпри, кокс, нефть продукчĕсем, хура металл тата тырă миллионшар тонна турттарнă.

Сталин ячĕпе тăракан автозавод çулталăкри плана тултарнă

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозавод коллективĕ 1951 çулхи программăна срокчен икĕ кун малтан тултарса çитернĕ.

Автозаводра ĕçлекенсем планран ирттерсе грузовиксем, çăмăл автомобильсем, автобуссем тата килти холодильниксем нумай туса кăларнă. (ТАСС).

Кашни ĕнерен 6.400 килограмм сĕт

Совхозсен министерствин тата Аш-какайпа сĕт-çу промышленность министерствин хуçалăхĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче Мускав çывăхĕнчи «Холмогорка» ятлă совхоз мала тухнă. Çак совхозра 1951 çулта кашни ĕнерен 6.400 килограмм сĕт суса илнĕ.

Кун пек пысăк çитĕнĕве совхоз работникĕсем ĕнесене тăрантарас тата пăхас ĕçе малта пыракан меслетпе туса пынипе тума пултарнă. «Холмогорка» совхоз коллективĕ сĕтеклĕ апатсем çулталăкра кирлинчен 27 процент ытларах хатĕрленĕ, утă-улăм вăра кашни ĕне валли 180-шар центнер хатĕрлесе хунă.

Çĕнĕ çул парнисем

ДНЕПРОПЕТРОВСК, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Паян, çĕнĕ çул кунĕ умĕн, Днепропетровскри Молотов ячĕпе тăракан заводри металлистсем, Куйбышев гидроузелне тăвакансен заказне пурнăçласа, шоссе çулĕ валли икĕ кĕпер конструкцине срокчен туса пĕтернĕ. Кĕперсене пĕтĕмпех металран шăратса тунă. «Волгодонстрой» валли те çавăн пек тăватă кĕпер ярса параççĕ. Заводăн 4-мĕш тата 6-мĕш цехĕсен коллективĕсем Мускавра Дорогомиловски набережнăйра тăвакан çÿлĕ çурт кăшкарне туса пĕтернĕ. Ăна пĕтĕмпех металран тунă. Çак çуртăн 12 хутĕ валли тунă пайсене тиесе ăсатнă.

• • •

ТЕМИР-ТАУ (Караганда облаçĕ), декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ çулта Казахстанри металлурги заводĕнчи хурçă шăратакансем хурçă хăвăрт шăратса кăларма вĕренсе çитнĕ. Вĕсем металл нормăран чылай ытларах шăратса кăларнă. Перекетлесе хăварнă мазутпа 5.600 тонна хурçă шăратнă.

• • •

ВОРОНЕЖ, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Воронежри Коминтерн ячĕпе тăракан экскаваторсем тăвакан завод коллективĕ çĕнĕ çула планран ирттерсе 13-мĕш экскаватор туса кăларнипе кĕтсе илнĕ. Коммунизмăн аслă стройкисене çавăн пек 40 агрегат срокчен ярса панă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Критикăпа самокритикăна вăйлатмалла

Советски районĕнчи ялхуçалăх пайĕнчи пуçламăш парторганизаци отчетпа суйлав пухăвĕ плана пăхнинчен вунă кун каярах иртрĕ. Çакна пуçламăш парторганизаци секретарĕ М. Громов юлташ тĕрлĕ сăлтавсемпе ăнлантарса пама тăрăшать.

Секретарь отчечĕ ытла та кĕске пулчĕ. Вăл партипе ĕç çинчен пĕтĕмĕшле сăмахсем çеç каларĕ, парторганизаци ĕçĕсене те, ситменлĕхсене сăлтавĕсене те тĕплĕ кăтартса памарĕ.

М. Громов юлташ отчет пуçламăшĕнче критикăпа самокритика пĕлтерĕшĕ çинчен каларĕ, анчах ăна ĕçре çирĕплетес тĕлĕшпе хăй ситменлĕхсĕр ĕçленине йышăнса илмерĕ тата парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен чарăнса тăмарĕ.

Секретарь парторганизацири коммунистсен шучĕ çинчен тата пĕр çынна члена илни çинчен пĕлтерчĕ. Икĕ коммуниста взыскани панă. Анчах М. Громов юлташ коммунистсен ĕçри ролĕ, вĕсене парти порученийĕсем пани, общественнăй-политикăллă ĕçе хутшăнтарни çинчен нимĕн те каламарĕ.

Отчетлă тапхăрта 5 пуху пулнă. Усă пухусем пачах ирттермен. Пухусене тĕплĕ хатĕрленмесĕр ирттернĕ. Йышăннă решенисем, вĕсем мĕнле пурнăçланни тĕрĕслемен пирки, хут çинче юлнă.

Ялхуçалăх пайĕнче профсоюз, комсомол, Досааф пуçламăш организацийĕсем пур. Парти организацийĕ вĕсене çителĕксĕр ертсе пынă. Отчет тăрăх общественнăй организацисен ĕçĕ çинчен нимех те пĕлме пулмарĕ.

М. Громов юлташ коммунистсене политикăллă воспитани парас ĕç лайăх пырать тесе ăнлантарма пăхрĕ. Вăл кашни коммунист хăйĕн политикăллă пĕлӳлĕхне мĕнле хăпартса пыни çинчен каламарĕ. Тĕрĕссипе каласан, кунта коммунистсене воспитани парас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Коммунистсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе йĕркеленĕ кружок (руководителĕ М. Громов юлташах) иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пĕр заняти те ирттермерĕ. Çапах та М. Громов юлташ отчетра хăйĕн йăнăшне йышăнмарĕ.

Парторганизаци учрежденире ĕç культурине ӳстерес тата служащисене политикăллă воспитани парас тĕлĕшпе нимех те сахал ĕçленĕ. Производствăллă канашлусем ирттерессине кирлĕ пек йĕркелемен, хăшпĕр служащисем хаçат-журнал çырăнса илмеççĕ, хăйсен квалификацийĕпе пĕлĕвне малалла ӳстерсе пырассишĕн тăрăшмаççĕ. Служащисем хушшинче ĕç дисциплини те начар. Парторганизаци секретарĕ хăйĕн отчечĕнче çак ыйтусене «манса хăварчĕ».

Парторганизаци çумĕнче стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăмасть. Хаçат редакторĕ Карагушина юлташ парторученине пурнăçламан. Ăна çакăншăн тивĕçлипе критикăлас вырăнне секретарь: «Парторганизаци Карагушина юлташ малашне хаçата йĕркеллĕ кăларса тăрĕ тесе шанать», терĕ. Çакă вăл, кунти парторганизацире большевикла критикăпа самокритика çуккине кăтартса парать.

Отчета çителĕксĕр хатĕрленнĕ пирки М. Громов юлташ нумай ыйтусем çинчен каламарĕ. ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе парторганизаци мĕнле ĕçлени çинчен пачах аса илмерĕ. Коммунистсен пуçарулăхне ӳстерес, учрежденире ĕççыннисен çырăвĕсемпе тата жалобисемпе мĕнле ĕçлени çинчен пĕр сăмах та каламарĕ.

Парторганизацире критикăпа самокритикăна хисеплеменнине нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать. Ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ В. Шумилов юлташа районти канашлусенче час-часах критикăлаççĕ. Анчах вăл хăй тухса каланă чухне йăнăшсене йышăнса илмест, вĕсене пĕтересси пирки те сăмах тапратмасть. Çапла вара йăнăшсене кулленхи ĕçре тӳрлетсе пымасть. Çитменлĕхсем çинчен каласан, вăл илтмĕш пулать.

Пĕтĕмĕшпе илсен, отчетлă пухура критика пулмарĕ. Тухса калаçакансем те секретарьтен «пример илчĕç». Вĕсем пуринчен ытла парторганизаци плансăр ĕçлени, пухусене сайра-хутра ирттерни çинчен çеç пĕтĕмĕшле сăмахсем каларĕç. Начар ĕçленĕшĕн секретаре критикăлакан пулмарĕ. Çитменлĕхсемшĕн чи малтанах кам айăплине те конкретлă кăтартса памарĕç.

Критикăпа самокритика вăл—малалла кайма пулăшать. Ялхуçалăх пайĕнчи пуçламăш парторганизацин критикăпа самокритикăна вăйлатмалла. Ку тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕ енчен те тивĕçлĕ пулăшу пани кирлĕ.

Я. СИГАЕВ.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Н. В. Гоголе пытарнă вырăн. Мускаври Новодевичье масар.

М. АЛЬПЕРТ фотоукерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Институтри кружоксем

Чăваш педагогика институтĕнче тĕрлĕ кружоксем ĕçлеççĕ. Студентсем лекцисемпе практикăллă занятисенче кăна мар, кружоксенче те пĕлӳ илеççĕ. Чылай кружоксен руководителĕсем пулса институтри преподавательсем ĕçлеççĕ.

Институтри пăллă кружоксенчен пĕри—чăваш литератури кружокĕ. Кружок занятийĕсем пысăк активлăхпа иртеççĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа виçĕ заняти ирттернĕ. Занятисенче К. Турхан̆ан «Пăмраллă ял» романне, Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкайăн çĕнĕ произведенийĕсене, Хв. Уярăн «Ылтăн кĕркунне» кĕнекине пăхса тухнă. Çавăн пекех литература кружокĕн членĕсем Чăваш академи театрĕ лартнă çĕнĕ спектакльсене те сӳтсе яваççĕ. Çак кунсенче «Чечеклĕ улмуççи» спектакле сӳтсе явнă.

Куçару кружокĕ те аван ĕçлет. Ăна кăçал анчах йĕркеленĕ. Вăл кружока аслă преподаватель Резюков юлташ ертсе пырать. Çак кунсенче иртернĕ занятире куçару теорийĕ çинчен доклад итленĕ. Ун хыççăн Л. Агаков куçарнă «Иван Никулин—вырăс матросĕ» кĕнекене мĕнле куçарнине пăхса тухрĕç.

Философи кружокне Г. Германов доцент ертсе пырать. Кружок занятийĕсенче студентсем марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене тĕплĕн вĕренеççĕ.

Институтра психологипе логика, физикăпа математика, радио тата ытти кружоксем те ĕçлеççĕ.

Кружоксем бюллетеньсем кăларса тăраççĕ. Историпе филологи факультетĕнчи литературăпа куçару кружокĕ «Знание—сила» бюллетень, физикăпа математика кружокĕ «Наука» ятлă бюллетень кăлараççĕ.

Кружоксен ĕçĕсене студентсен институтри наукăллă обществи йĕркелесе пырать.

П. СОЛОВЬЕВ.
В. ВАСИЛЬЕВ.

Малта пыракансен опычĕпе паллаштаратпăр

Кашни сурăхран 5 килограмм çăм

(Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри сурăх фермин заведующийĕ Н. М. Крынецкий каласа пани)

Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçре сурăх ĕрчетесси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Эпир иртнĕ çулхине çăм касса илес тата çамрăк путексем пăхса çитĕнтерес ĕçре чылай ăнăçусем турăмăр. Кашни сурăхран план тăрăх 2,5 килограмм çăм касса илмелле пулнă пулсан, 4,3 килограмм илтĕмĕр тата 190 сурăхран 238 путек илсе пăхса çитĕнтертĕмĕр.

Икĕ çул каялла пирĕн фермăра ĕратсăр тата шултра çăмлă сурăхсем пулнă. Вăл вăхăтра кашни сурăхран пурĕ те 2,1 килограмм кăна çăм касса илнĕ. Çавăнпа та пирĕн сурăхсен ĕратне лайăхлатмалла пулчĕ. Эпир ку тĕлĕшпе 1950 çулта тата 1951 çулта советски меринос такасем 5 туянтăмăр. Юлашки икĕ çул хушшинче çак такасемпе вырăнти сурăхсене чуптарса, фермăри сурăхсен ĕратне лайăхлатрăмăр. Халĕ пирĕн ĕратсăр тата шултра çăмлă сурăхсем пачах та çук.

Сурăхсене чуптарса хăварасси чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри пулать. Çак кампани пуçланас умĕн эпир сурăхсене тата хĕл каснă путексене, çавăн пекех такасене кирлĕ чухлĕ мăнтăрлататпăр.

Çуллахи вăхăтра сурăхсене пăхассине çакăн пек йĕркелетпĕр: ирхине сурăхсене курăк сахалтарах çĕре пăхма хуса тухатпăр, мĕншĕн тесен ирхине сурăхсем апат сахалтарах çиеççĕ, ытларах чупса çӳреççĕ тата сывлăмлă курăк сурăхсемшĕн сиенлĕ, сывлăм типсе çитсен тин эпир сурăхсене курăклăрах пуянтарах çĕре пăхма кăларатпăр. Утă çулнă хыççăн сурăхсене улăхра пăхма пуçлатпăр, тырпула пухса кĕртсен уйра пăхатпăр. Сурăхсене лачакаллă мар, типĕ вырăнсене çӳрететпĕр. Лачакаллă вырăнсене пăхсан, çамрăк путексем шĕвĕрĕлчен чирĕпсемпе чирлеççĕ.

Сурăхсене кĕтӳре çӳретнĕ чухне кăнтăрла тата кас пулас умĕн пĕр икĕ сехет малтан шăваратпăр. Сурăхсене кĕтӳре мĕн тĕттĕм пулачченех çӳрететпĕр, мĕншĕн тесен вĕсем сулхăнрах вăхăтра курăка лайăх çиеççĕ. Сурăхсене мĕн юр çăвиччен кĕтĕве кăларатпăр, вĕсем ун чухне лайăх мăнтăрланаççĕ.

Такасене август уйăхĕнче кăна кĕтĕве кăларса яратпăр. Ку вăхăтра сурăхсем тата хĕл каснă путексем мăнтăр пулаççĕ, çавăнпа вĕсем чупасси те вăйлăрах пулать. Çак вăхăтра чуптарса хăварнă сурăхсем ытларах путексем туса параççĕ тата вĕсем вăйлă та сывă пулаççĕ.

Пăрамлас вăхăт çывхарса çитсен умĕн сурăхсен кирлĕ мар вырăнти çăмне касса илетпĕр. Пăрамлана хыççăн сурăхсен силлисене те çăмран тасататпăр тата ăшă шывпа çăватпăр. Çак ĕçсене тумасан, путексем çăмпа тасамарлăха ĕмсе илме пултараççĕ, вара пыршисем питĕрĕнсе вилме пултараççĕ.

Пăрамлана вăхăтра сурăхсене ятарласа тунă пӳлĕме хупатпăр. Пирĕн кун пек пӳлĕм 20 сурăх валли пур. Сурăхсене çак пӳлĕмре 3—4 кун хушши путекĕсемпе пĕрле усратпăр. Йĕкĕреш, вăйсăр тата çирĕпрех путеклĕ сурăхсене уйрăм групписене уйăрса, уйăх пӳлĕмсене усрама куçаратпăр. Вĕсене ăшă пӳлĕмсенче усратпăр. Йĕкĕрешлĕ тата вăйсăртарах путеклĕ сурăхсене лайăхрах апат паратпăр. Сурăхсене памалли лайăх утта эпир малтанах уйăрса хуратпăр.

Кăшăр чухне йĕкĕреш е тата ытларах путек тунă сурăхсем, путексенчен хăшне-пĕрне пăхма йышăнмаççĕ. Ун пек чухне эпир юратнă путекне сурăхран вăхăтлăха уйăратпăр, йышăнман путекне тăвар шывĕпе сĕрсе, сурăх патне ярататпăр. Сурăх çак путек патне хăнăхсан тин эпир ун патне юратнă путекне ярататпăр. Тата çакăн пек те пулать: вăйсăртарах çуралнă путек амăшĕн сĕтне хăй тĕллĕн ĕмейместĕ. Ун пек чухне сурăхсен сĕтне сăвса илсе, соскăпа путеке ĕçтеретпĕр. Çавăн пек ĕçленипе пула эпир юлашки вăхăтра пур путексене те сыхласа хăваратпăр.

Хĕллехи вăхăтра, пăрамлас умĕн, сурăхсене çакăн пек нормăпа тăрантаратпăр: ирхине 6 сехетре 500-шар грамм сĕлĕ улăмĕ, 11 сехетре 750-шар грамм утă, кăнтăр иртсен виçĕ сехетре 750-шар грамм утă паратпăр. Сурăхсене çу çĕрте апатлантаратпăр. Ун пек тусан, вĕсем апата хăвармасăр çисе яраççĕ. Апат парсан валашкасенче ялан ăшăрах шыв пулать. Сурăхсем апатланнă чухне тăтăшах шыв пырса ĕçеççĕ.

Çăм касма май уйăхĕнче тытăнатпăр. Кашни сурăхран касса илнĕ çăма уйрăм çыхса хуратпăр. Ĕрат тĕлĕшĕнчен уйрăмах лайăх сурăхсенчен 5-шер килограм ытла çăм касса илетпĕр.

Çăм пахалăхĕшĕн питĕ тăрăшни кирлĕ. Сурăхсен хӳрисем таса мар пулнă май кашни пусран 200—300 грамм çăм сухалма пултарать. Малашне эпир çакăн пек тăвасшăн: 80 куна çитнĕ путекĕн хӳрине 8—10 сантиметр тăршшĕ хăварса касатпăр. Ун пек тусан, кĕске хӳреллĕ сурăх çăма юрăхсăр кăламасть.

Сурăх фермине ĕçлекенсене çăм касса илнĕ тата путексем пăхса çитĕнтернĕ тăрăх ĕçкунĕсем параççĕ. Пирĕн колхозра çавна лайăх шута илеççĕ. Иртнĕ çулхине эпĕ М. Крыницкийпа пĕрле 1.460 ĕçкунĕ ĕçлесе илтĕмĕр тата пире ĕçпе хушса тӳлемелли йĕркепе тăрăх 80 килограмм çăм, 6 уйăхри путексем 14 пачĕç. Çакăн пек хушса тӳлени пире тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

Пĕлтĕр общественнăй выльăх-чĕрлĕхе йышпе ӳстерме тата унăн тухăçлăхне хăпартма «умласть». Эпир колхозра усăллă виçĕ çулхи зоотехника курсне тăтăшах çӳретпĕр, унсăр пуçне сурăхсене мĕнле пăхмалли çинчен калакан кĕнекесене пуçманах илсе вулатпăр. Хамăр пĕлĕве кунтан кун ӳстерес пирки пире пур енĕпе пулăшаççĕ.

Эпир лайăх ĕçлени колхоза татах та тĕреклетме, колхозниксен пуян пурнăçне май парать. Пирĕн колхоз çулсерен общественнăй выльăх-чĕрлĕхрен пысăк тупăш илет. Кăçал кăна колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕхрен çур миллион тенкĕ тупăш илчĕ. Унсăр пуçне, пирĕн колхоза СССР Ялхуçалăх министерстви выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарнăшăн тата патшалăха плана пăхнинчен ытлашши сĕт панăшăн «ГАЗ-51» йышши икĕ автомашинăпа премиленĕ.

Кăçал эпир тата пысăкрах обязательствăсем илетпĕр: кашни сурăхран 5-шер килограмран кая мар çăм, кашни 100 сурăхран 125 путек илессишĕн тăрăшатпăр.

Пропагандистсен семинарĕ

ВКП(б) Ишлей райкомĕ пропагандистсен черетлĕ семинарне ирттерчĕ. Семинарта И. В. Сталин юлташ биографине тата «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» пĕрремĕш çул вĕренекенсен кружокĕсене ертсе пыракансем пулчĕç.

Семинарта ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ С. Самсонов юлташ И. В. Сталин юлташăн «Диалектикăллă тата историллĕ материализм çинчен» çырнă кĕнеки тăрăх лекци вуласа пачĕ.

«11 лет Чувашии» колхозри парторганизаци çумĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружокра ку темăна вĕреннĕ. Кружок руководителĕ Е. Елькин юлташ пропагандистсене çак тема тăрăх заняти мĕнле майпа ирттерни çинчен каласа пачĕ.

Е. Елькин юлташ пропаганда ĕçĕнче пысăк опыт туяннă. Вăл темиçе çул хушши ĕнтĕ марксизм-ленинизм теорине вĕренмелли кружоксене ертсе пырать. Кашни заняти валли конспект çырса хатĕрлет, материалпа тĕплĕ паллашать. Уйрăмах,—тет пропагандист,—эпĕ Сталин юлташăн диалектикăллă тата историллĕ материализм çинчен çырнă кĕнеки тăрăх ирттермелли занятие нихçанхинчен те ытларах тăрăшса хатĕрлентĕм. Чылай политикăллă литература вуларăм.

Е. Елькин юлташ хăйĕн конспекчĕпе паллаштарчĕ, ĕç планне мĕнле пурнăçлани çинчен каласа пачĕ.

Пропагандистсем семинарта пĕр-пĕрин опычĕпе паллашрĕç. Уйрăмах А. Черкасова юлташ ертсе пыракан кружок лайăх ĕçленине палăртмалла. Кружокра 17 çын И. В. Сталин юлташăн биографине вĕренет. Вĕренекенсем—Ишек больницинче ĕçлекенсем. Вĕсем хушшинче сахалтарах пĕлӳ илнĕ юлташсем те чылай. Кружок членĕсем аслă çулпуçăн пурнăçĕпе ĕçĕсене çав тери пысăк тимлĕхпе тăрăшса вĕренеççĕ.

Кунта пурĕ 9 заняти ирттернĕ. 17 вĕренекентен пĕри те, пĕр сехет те сиктермен. Занятисене пурте вăхăтра, йĕркеллĕ, лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. А. Черкасова юлташ вĕренӳ ĕçĕнче пысăк ӳсĕмсене мĕнле майпа туни çинчен тĕплĕ каласа кăтартрĕ, пропагандистсене хăйĕн ĕç меслечĕпе паллаштарчĕ.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружоксенчен И. Никитин юлташ ертсе пыракан кружок лайăх ĕçленине палăртмалла. И. Никитин юлташ Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци çумĕнче йĕркеленĕ кружока ертсе пырать. Пропагандист семинара пынисене хăй ертсе пыракан кружок ĕçĕпе паллаштарчĕ.

Кружокра пурĕ 14 çын вĕренет. Вĕсем—колхозниксем, колхозри ертсе пыракан работниксем. Вĕренӳ дисциплини малтанхи кунранах лайăх пырать. Пурĕ 11 заняти ирттернĕ. Занятисем эрнере пĕр хут, палăртнă кун улттă сехетре пуçланаççĕ. Кая юлса пыракансем çук, вĕренекенсем занятисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ. Кашниех вĕреннĕ материал тăрăх тĕплĕ конспект çырса пырать. В. Герасимов колхозник, А. Платонова бригадир, Григорьева, Бурков юлташсем тата ытти вĕренекенсем те хăйсен политикăллă тата производствăллă активлăхне куллен ӳстерсе пыраççĕ.

Семинарта ытти пропагандистсем те хăйсен опычĕпе паллаштарчĕç. Парти райкомĕ çакăн пек семинарсем тăтăшах ирттерет.

О. КАЛИНИНА.

Шкулти парторганизаци отчечĕ

Элĕкри вăтам шкулти пуçламăш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртнĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче парторганизаци 14 учителе диалектикăллă тата историллĕ материализма вĕренмелли кружока хутшăнтарнă. Кружок занятийĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Виçĕ коммунист парти историне марксизм-ленинизм произведенийĕсем тăрăх вĕренеççĕ. Çулпуçсен биографийĕсене вĕренмелли кружока виçĕ коммунист çӳрет. Шкулта ĕçлекен ытти работниксене политикăна вĕрентес ĕçе те аван йĕркеленĕ.

Парторганизаци вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе хăйĕн пуçарулăхне сахал кăтартнă, комсомол организацине те çителĕксĕр пулăшнă. Кăçалхи вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче 520 ачаран 132 ача вĕренӳре ĕлкĕрсе пыман.

С. ТИХОНОВ.

Массăсем хушшинче ĕçлесси—парти работникĕн тивĕçĕ

А. ЖИРКОВ,
ВКП(б) Пăрачкав райкомĕн секретарĕ

Совет Союзĕ коммунистсен партийĕ тата пирĕн çулпуçăмăр аслă Сталин юлташ ертсе пынипе социализмран майĕпен коммунизма куçас тапхăра кĕчĕ. Халĕ ĕнтĕ коммунизм пирĕн халăхсемшĕн инçетри тĕллев мар. Коммунизм совет обществин йăла-пурнăçне куллен кĕрсе пырать.

Коммунизм тăвас тĕлĕшпе совет халăхĕн кĕрешĕвне Ленин—Сталин партийĕ организацилесе тата хавхалантарса пырать. Хальхи вăхăтра пирĕн парти хăйĕн мĕнпур организацийĕсене ĕççыннисен коммунистла ăнланулăхне ӳстерес, вĕсене политикăллă воспитани парас ĕçсем çине уйрăмах тимлĕ пăхма хушать.

Массăсем хушшинче ĕçлессине пур майсемпе те вăйлатса пырасси, ĕççыннисене политикăллă воспитани парса коммунизмшăн кĕрешес ĕçре вĕсен хастарлăхне ĕçклесе пырасси парторганизацисен тĕп задачисем пулса тăраççĕ. ВКП(б) Пăрачкав райкомĕ политикăллă ĕçе вăйлатассишĕн куллен тăрăшать, парторганизацисемпе массăсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетет, идейăллă-политикăллă ĕçе ялти интеллигенцие, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче малта пыракансене нумайтарах хутшăнтарма тăрăшать.

Ĕççыннисем хушшинче политикăллă ĕçе анлăрах йĕркелесси парти работникĕсемпе активĕнчен нумай килет. ВКП(б) райкомĕ районти ертсе пыракан работниксене ĕççыннисем валли лекцисем, докладсем тата политикăллă калаçусем ирттерес ĕçе активлă хутшăнтарать. Райком бюровĕ докладчиксемпе лекторсен ушкăнĕсене турĕ. Докладчиксен ушкăнĕнче—42 çын, лекторсен ушкăнĕнче—13 çын. Вĕсен тивĕçĕ—ĕççыннисем хушшинче политика, наукăпа техника, литературăпа искусство тата çутçанталăк ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе докладсем ирттересси.

Штатра тăман докладчиксемпе лекторсем хушшинче партипе совет работникĕсем нумай. Массăсем хушшинче политикăллă ĕçе туса пыма вĕсен политикăллă тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ те, опыт та çителĕклĕ. Парти райкомĕ кашни уйăхрах докладсемпе лекцисен тематикине райком бюровĕнче пăхса тухса çирĕплетет, лекторсемпе докладчиксене хăçан тата ăçта пулмаллине, мĕнле тема тăрăх лекци е доклад ирттермеллине кăтартса парать.

Парти райкомĕ ертсе пыракан работниксене ĕççыннисем валли докладсемпе лекцисем туса парасси пысăк пĕлтерĕшлĕ политикăллă ĕç пулни çинчен ăнлантарса пынипе пĕр вăхăтрах, вĕсене пулăшса пычĕ, вĕсен вĕренĕвне те лайăхрах йĕркелеме тăрăшрĕ. Хальхи вăхăтра партипе совет органĕсенчи ертсе пыракан работниксем рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци валли тăтăшах политикăллă докладсемпе лекцисем ирттереççĕ. 1951 çулта райкомăн штатра тăман докладчикĕсемпе лекторĕсем тĕрлĕ темăсем тăрăх 600 ытла доклад тата лекци ирттернĕ.

Парти райкомĕ çакăн пек йĕрке турĕ: районти ертсе пыракан работник вырăнта пулсан, унăн ĕççыннисем валли пĕрпĕр тема тăрăх доклад е лекци туса памалла. Пĕр ӳстермесĕр çапла калама пулать: халĕ ĕнтĕ парти аппаратĕнче ĕçлекен кашни çын вырăнта пулсан, доклад е лекци ирттермесĕр каялла тавăрнмасть. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче Роганов юлташ районти чылай колхозсенче, учрежденисенче, вăрман предприятийĕсенче пулчĕ, пур çĕрте те вăл доклад е лекци туса панă.

ВКП(б) райкомĕн бюро членĕсем те ĕççыннисем валли тăтăшах докладсемпе лекцисем туса параççĕ. ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ Спичков юлташ колхозсенче пулса 17 доклада лекци, бюро членĕ Эссен юлташ—13, ВКП(б) райкомĕн виççĕмĕш секретарĕ Ногаев юлташ—12 доклад туса панă. Ертсе пыракан работниксем политикăллă докладсемпе лекцисем туса панă чухне ĕççынни массăсем вĕсем умне тĕрлĕ йышши ыйтусем нумай кăларса тăрататççĕ. Массăсен ыйтăвĕсем çине тимлĕ пăхни колхоз е предприяти пурнăçĕпе ĕçне, массăсен шухăш-кăмăлне тĕпчесе пĕлме тата умма тухса тăнă конкретлă ыйтусене вăхăтра татса пама пулăшать. Ертсе пыракан работниксем вырăнсенче час-часах пулнипе тата массăсемпе калаçнипе колхоз е предприяти ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕпчесе пĕлсе вĕсене пĕтермелли майсене вăхăтра кăтартса параççĕ.

Çур çул каярах ВКП(б) райкомĕн бюровĕ Чкалов ячĕпе тăракан промысла артель ĕçĕсем çинчен сӳтсе яврĕ. Артель плана тултарса пырайман. Çакă вăл рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменнинчен килнĕ. Политикăллă ĕçе йĕркелеме парти райкомĕ артеле райком секретарьне Ногаев юлташа тата райсовет исполкомĕн председателĕн заместительне Теребилов юлташа ячĕ. Вĕсем рабочисем валли тĕрлĕ ыйтусем тăрăх лекцисемпе докладсем, политикăллă калаçусем ирттерчĕç. Коммунизмăн аслă стройкисем çинчен туса панă доклада рабочисем уйрăмах тимлĕ итленĕ. Çак пухура рабочисем артель юлса пынине пĕтерме пулăшакан лайăх сĕнӳсем панă, çулталăкри плана срокчен—Октябрь уявĕ тĕлне тултарма обязательство илсе, районти предприятисене социализмлă ăмăртăва чĕннĕ. Райком бюровĕ рабочисен пуçарăвне ырларĕ, Пуçламăш парторганизаци массăсен пуçарăвне организациллĕ ĕçсемпе çирĕплетрĕ, рабочисен социализмлă ăмăртăвне лайăх йĕркелерĕ. Артель хăйĕн обязательствине 126 процент тултарчĕ.

Висяга ял Совечĕ тата унти Ильич ячĕпе тăракан колхоз хуçалăхпа политикăллă задачăсене пурнăçлас ĕçре юлса пыратчĕç. Политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелеме парти райкомĕ пропагандăпа агитаци пайĕн икĕ работникне çак колхоза нумай вăхăтлăха ячĕ. Вĕсем колхозра тĕрлĕ ыйтусем тăрăх докладсемпе лекцисем ирттерчĕç, агитаторсен ĕçне йĕркелерĕç, колхозри çитменлĕхсене тата вĕсем мĕнрен килнине тĕпчесе пĕлчĕç. Партиллĕ-политикăллă тата массăллă-организациллĕ ĕçсене вăйлатни Висяга ял Советне мала тухма пулăшрĕ. Вăл Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Парти райкомĕ ĕççыннисене политикăллă воспитани памалли ытти майсемпе те анлă усă курать. Пуринчен ытла агитаторсене воспитани парасси, вĕсен ĕçне лайăх организацилесе ертсе пырасси пысăк ыйту пулса тăрать. Пирĕн районти колхозсенче, предприятисенче тата учрежденисенче 750 агитатор ĕçлет. Вĕсем хушшинче ялти интеллигенци, малта пыракан рабочисем, вăйлă тырпул мастерĕсем нумай.

Агитаторсем ĕççыннисен анлă массине партипе правительство политикине, умра тăракан задачăсене тĕплĕ ăнлантарса парса, совет çыннисен пултарулăхĕпе творчествăллă активлăхне вăйлатса пыраççĕ. Халăх суйлавне районти суйлавçăсенчен 99,97 проценчĕ хутшăнни, суйлавçăсенчен 99,99 проценчĕ коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăлани—пирĕн ĕççыннисен политикăллă активлăхĕ пысăк пулнине кăтартса парать. Çак çитĕнĕве тăвас ĕçре агитаторсем пысăк вырăн йышăнса тăчĕç.

Агитаторсен нумай йышлă çарне воспитани парасси, вĕсен ĕçне куллен организацилесе ертсе пырасси парторганизацисен тивĕçĕ пулса тăрать. Большевикла агитацин идейăллă шайĕ, унăн витĕмлĕхĕ агитаторсенчен нумай килет. Парти райкомĕ агитаторсемпе докладчиксен теориллĕ пĕлĕвне ӳстерет, вĕсене политикăллă ĕçĕн методикипе паллаштарать. Кашни уйăхрах агитаторсен семинарĕсене ирттеретпĕр, вĕсене ĕçри паха опытпа паллаштаратпăр, теори тата методика ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем ирттеретпĕр. Семинарсенче лекцисемпе докладсене райком секретарĕсем, бюро членĕсем, пайсен заведующийĕсем туса параççĕ.

Парти райкомĕ докладчиксемпе лекторсене те кашни уйăхрах пухса инструктаж парать. Май килнĕ таран эпир кашни докладчика парти обкомĕ ярса панă е парти райкомĕ хатĕрленĕ лекцисемпе докладсен тезисĕсене паратпăр. Работник, вăл колхоза е предприятие доклад тума каяс умĕн, парти райкомĕнче пулать. Райком секретарĕсем е пропагандăпа агитаци пайĕ унăн лекцийĕн тезисĕсене пăхса тухаççĕ, район пурнăçĕпе çыхăнса тăракан ыйтусене тарăнрах çутатса пама пулăшаççĕ.

Массăсем хушшинче политикăллă ĕçе организацилес тĕлĕшпе парторганизацисен ответлăхне ӳстерес шутпа парти райкомĕ час-часах хăйĕн бюровĕнче парторганизаци секретарĕсен доклачĕсене сӳтсе явать. Юлашки вăхăтра бюрора массăллă-политикăллă ĕçе ертсе пыни çинчен «Большевик» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕн Глубников юлташăн докладне, ĕççыннисем валли политикăллă докладсем ирттерес ĕçри практика çинчен «VI-ой съезд Советов» колхозри парторганизаци секретарĕн отчетне сӳтсе явнă. Райкомăн çитес пленумĕнче массăсем хушшинче политикăллă ĕçе вăйлатмалли майсем çинчен ятарласа сӳтсе явма палăртнă.

Анчах çакна палăртас пулать: парти райкомĕ массăллă-политикăллă ĕçĕн пур майĕсемпе те кирлĕ чухлĕ усă курмасть. Районти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çак учрежденисен ĕçне парти райкомĕ тивĕçлипе ертсе пыман. Ку пысăк çитменлĕхе хăвăртрах пĕтермеллине кăтартса парса, ВКП(б) обкомĕн бюровĕ пирĕн райкомумне конкретлă задачăсем кăларса тăратрĕ. Парти райкомĕ обком кăтартăвĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатма тата массăллă-политикăллă ĕçсен идейăллă содержанине вăйлатма пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртрĕ. Паллах, клубсен, вулав çурчĕсен, библиотекăсен, ялти лекторисен ĕçĕсемпе тăтăшах интересленни парти райкомне политикăллă-массăллă ĕçе çӳлĕ пусăма çĕклеме пулăшать.

Массăсене политикăллă воспитани парас ĕçре эпир вырăнти пичетпе çителĕклĕ усă курмастпăр. Районти хаçат партиллĕ-политикăллă ĕç ыйтăвĕсене, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне, агитколлективсемпе агитаторсен ĕçне çителĕксĕр çутатать. Нумай колхозсенче стена хаçачĕсем, боевой листоксем тăтăшах тухса тăмаççĕ. Вырăнти пичет работникĕсене пулăшас тата вĕрентес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Ĕççыннисене кино кăтартас, массăсен художествăллă пултарулăхне малалла аталантарас, районти радиоточкăсен ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе те пысăк çитменлĕхсем пур.

Парторганизацисен массăсем хушшинче хăйсен влиянине вăйлатма пысăк майсем пур. Вĕсемпе тĕрĕс усă курни ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçе нумай лайăхлатма пулăшаççĕ. Рабочисемпе колхозниксен пухăвĕсенче массăсене большевикла партипе Совет правительствин политикипе решенийĕсене тĕплĕ ăнлантарса пани, Ленинпа Сталинăн никам çĕнтерейми вăйлă идейисене, коммунизм тăвас тĕлĕшпе пирĕн умра тăракан задачăсене уççăн кăтартса пани совет çыннисене çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать.

Партин Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви тата пирĕн çулпуçăмăр аслă Сталин юлташ Чăваш республикин промышленноçпе ялхуçалăхне, культура строительствине малалла аталантарас, ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк задачăсем кăларса тăратрĕç. Партипе правительство пирĕн республикăна пулăшу пани çинчен ĕççыннисен анлă массине тĕплĕ ăнлантарса пани пирĕн колхозниксене, рабочисене, интеллигенцие тата мĕнпур ĕççыннисене хуçалăхпа политикăллă задачăсене пурнăçлас ĕçре çĕнĕ вăй-хăват кӳрет, коммунизм строительствин пур участокĕсенче те чаплă çĕнтерӳсем тума мобилизацилет.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Малтанхи çуна çулĕпе

Кĕркуннехи уяр çанталăк. Ĕнер кăнтах сумăр пĕлĕтсем пуçтарăнма пуçланăччĕ, ир енне пĕлĕтсем каллех сирĕлчĕç. Ылсем çумăра та кĕтеççĕ, акса хăварнă тырăсене пăрĕ çав тери кирлĕ. Колхоз председателĕ Сергеев юлташ темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕ: шăтса тухнă калчана чăнах та çак вăхăтра çумăр кирлĕ, анчах паян ир колхозран Кире вăрманне йывăç хатĕрлеме тухса каймалла-çке... Çак шухăш ăна колхоз правлени канцелярине кĕрсессĕн те ирĕк памарĕ.

Алексей Сергеевичăн парти пухăвĕнче калаçса татăлни аса килчĕ. Коммунистсем вăрмана колхозниксен ĕçне йĕркелеме ăна, правлени председательне, яма килĕшрĕç.

— Эсир ĕçе лайăх йĕркелеме пултаратăр, çавăнпа сирĕнех каймалла пулать вăрмана,—терĕç парти пухăвĕнче.

Ăна вăл асрах тытать. Парторганизаци хушнă ĕçе чылай ĕлĕкрех пурнăçлама хăнăхса çитнĕ вăл. Акă халĕ те иртнĕ каçхине колхозниксене пухăвĕнче калаçнисене тепĕр хут аса илчĕ. Пурне те тĕплĕ сӳтсе явнăччĕ: камăн пуртă, камăн пăчкă илмеллине палăртнăччĕ, йывăç каснă çĕрте звеносене ĕçлесси çинчен калаçнăччĕ, звеносене ертсе пыма ĕçчен те пултаруллă колхозниксене уйăрнăччĕ. Пуçласпăн парторганизаци агитаторсем уйăрнă. Апат-çимĕçсем илсе кайасси çинчен те калаçса татăлнă. Çавах та Алексей Сергеевич паян ирхине хăйне хăй татах тĕрĕслесе тухрĕ: мĕн те пулин манса хăварман-ши, пурне те шута илтĕмĕр-ши? Государствăна, коммунизмăн аслă стройкисене йывăç питĕ кирлĕ, çавăнпа та вăл ĕçе çитĕнлĕ хатĕрлесе памалла, «Сталинцы» колхоз членĕсен çĕ те унта пысăк вырăн йышăнĕ.

...Канцелярине пырса кĕнĕ колхозниксем унăн пĕтĕçсе пыракан шухăшĕсене арпаштарса ячĕç. Алексей Сергеевич пекех вĕсем те ир тăрса хатĕрленсе тухнă колхозниксем шӳт туни, пĕр-пĕринчен кăмăллăн тăрăхлани кашнинех хавхалантарчĕ, шухăш-кăмăла çĕклентерчĕ.

— Пухура калаçнисене манмарăр-и? Пурне те илтĕр-и?—ыйтрĕ колхоз председателĕ.—Кайран манса юлнă тĕрлĕ ĕçлемелле ан пултăр,—асăрхаттарчĕ вăл. Вăрман ĕçлеме кайма килĕшнĕ колхозниксене колхозницăсем пурте пухăнсан.

* * *

— Йывăç касмалли плана тултармасăр киле таврăнмастпăр. Вăрман вăл уй-хир пекех, ĕçченсене çеç юратать. Çавăнпа та кашнин пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлемелле, пĕрин çине шанса хăлхамăрпа пулмалла мар,—ăс панă пек калаçса илчĕç ватăрах çынсем.

— Кăçал çес каймастпăр ĕнтĕ вăрман касма...—кăмăлсăрланнă пек пулчĕç çамрăксем.

Çапла октябрĕн малтанхи кунĕсенче «Сталинцы» колхозран 48 çын вăрмана тухса кайрĕç. Вырăна çитсен колхоз председателĕ Сергеев юлташ хăй кайса пăхса деляника йышăнчĕ, звеносене ăçта тăратмаллине палăртса хучĕ. Вăл хăйĕн шухăшĕсене колхозниксене ăнлантарса пачĕ.

— Кашни звенора ик-виç арçын пулать, вĕсем йывăçа касса йăвантарĕççĕ, хĕрарăмсем каснă йывăçа сыпăлаççĕ, туратсене пухса, çунтараççĕ. Астăвăр, ĕçе тĕплĕ тăвăр, пирĕн ĕçе хурлама ан пултарччăр...

Колхозниксем пур ĕçе те типтерлĕ тума тăрăшнă. Ятарласа апат пĕçерме илсе кайнă Агафия Гордеевна ирхине 5 сехетчен апат пĕçерсе хатĕрленĕ. Пурте лайăх ĕçленĕ, çавах та Андрей Данилов звени (унта М. Васильев, И. Ильина, А. Дмитриева, М. Артемьева, М. Кириллова) социализмлă ăмăртура малта пынă. Çак звено пуринчен ытла йывăç каснă, каснă йывăçа тĕплĕн якатса пынă. А. Данилов звени вăрман касмалли плана тултариччен яла таврăнмарĕ.

«Сталинцы» колхоз членĕсем Октябрьти Социализмлă Аслă революци 34 çул тултарнă тĕле плана тултарас ĕмĕтпе тăрăшса ĕçленĕ. Ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне «Сталинцы» колхоз членĕсем 1.600 кубометр вырăнне 1.650 кубометр касса плана ытлашшипех пурнăçланă. Çĕрпӳ районĕнчи пирвайхи колхоз, ĕçчен колхозниксем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртнĕ.

— Эсир хаçат çине çырнă чухне,—терĕ колхоз председателĕ Сергеев юлташ,—Анна Дмитриева колхозницăна ан манăр, унăн ятне колхозра кăна мар, районта та, республикăра та пĕлччĕр, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн хастарлă ĕçĕпе ыттисене хавхалантарса пычĕ.

Алексей Сергеевич çак сăмахсене уйрăмах ăшă кăмăлпа, вашаватлăн каларĕ те ыттисене те ырласа илчĕ.

* * *

— Йывăç касасси—пĕр ĕç, анчах каснă йывăçа турттарма та манмалла мар. Ăна манас мар тесен, çуна çулне кĕтсе ларни кăлăхах пулнă пулĕччĕ,—астутарчĕ ăна парти пухăвĕнче. Çуран çынсем кайнă хыççăнах колхозран 10 лав урапасемпе вăрăм çула тухса кайнă. Лавçăсен бригадине ертсе пыма Михаил Маркова уйăрнă. Часах вăрмана Иван Булыгин шофер «ГАЗ-51» автомашинăпа çитнĕ.

Пĕренесене тиеме-пушатма колхоз правленийĕ 8 вăйпитти арçына уйăрнă. Иван Лаврентьев конюх лашасене вăхăтра апатлантарнă, вăхăтра шăварнă. Грузчиксем Кирилл Егоров, Иван Васильев, Давыд Артемьев, Юрий Федоров юлташсем штабельсем çинчен пĕренесене лавсем е машина çине тиенĕ.

— Ачсемĕр, намăс курар мар, эпир сталинецсем,—«Сталинцы» колхоз колхозникĕсем пĕр-пĕрне кăмăлне çĕклентерсе ĕçленĕ.—Эпир хамăр колхоза тĕнчери чи аслă, чи ăслă, мирлĕ пурнăç ялавне çирĕп тытса пыракан Сталин ятне панă. Сталин юлташ вĕрентнĕ пек ĕçлемелле пирĕн...

Тăватă грузчик машина çине 7 кубометр йывăç тиенĕ, тиес вăхăт ниçсан та 20 минутран иртмен, машина кун каçиччен 7—8 рейс тунă, çав хушăрах 4 грузчик лавсем çине те йывăç тиеме ĕлкĕрсе пынă. Турттарса пынă йывăçа пушатнă çĕрте каллех 4 грузчик ĕçленĕ, вĕсем те кашни минутшăн кĕрешнĕ, çавăнпа та лавсем те, машина та пĕр чăрмавсăр, вăхăтпа туллин усă курса ĕçленĕ.

Ĕç пĕр чăрмавсăр пынăшăн колхоз председателĕ савăннă, анчах сасартăк пĕр кун хушшинчех юр хулăн çуса лартнă. Алексей Сергеевичшăн та, колхозниксемшĕн те юр кĕтмен çĕртен çуса лартнă пекех туйăннă, мĕншĕн тесен вĕсем çунасем илсе кайман. Анчах вăхăта сая ямалла мар, çунасем тупас пулать. Вăл çавăнтах колхозниксемпе канашласа илнĕ те çунасене унтах, вырăнтах сутăн илме калаçса татăлнă.

— Çунасемшĕн киле кайса вăхăт иртерни усăсăр пулнă пулĕччĕ, пирĕн колхозăн пур-пĕр çунасем туянмалла. Эх, çав Апакассинчи Громов ячĕпе тăракан аласталăх артелĕ те çунасем тума пăрахрĕ... Ĕлĕкрех вĕсен çунисене Çĕрпӳ пасарĕнче ырлаччĕç çеç...

...Çунасемпе турттарма тытăнсан, ĕç малтанхинчен те хăвăртрах кайма пуçланă, лавсем çине ытларах тиеме май пулнă. Тарăн юра тулли лавсем такăрлатса çул тунă. Лавçăсем яланах нормăна ирттерсе тултарнă. Вунă лавçă 932 кубометр йывăçа çул хĕррине илсе тухнă тата 820 кубометр турттарса кăларнă, çавăншăн вĕсем 5 пин тенкĕ ытла ĕçлесе илнĕ, унсăр пуçне колхоз лашасем ĕçленĕшĕн 6.296 тенкĕ укçа илнĕ.

* * *

Колхоз председателĕ хăй вăрманта колхозниксемпе пĕрле ĕçленипе «Сталинцы» колхоза ăнăçлăх тунă. Çитменлĕхсене вырăнта пĕтерсе пынă.

— Мĕн пытармалли пур,—тет Алексей Сергеев юлташ,—вăрманпромхозри хăшпĕр работниксем начар ĕçлеççĕ, турттарнă йывăça çийĕнчех йышăнмаççĕ. Эпир вăрмана пырсанах çапла каларăмăр: пире участок уйăрса парăр, çав участок çинчи йывăçсене хамăр касатпăр, хамăр тасататпăр тата хамăрах турттаратпăр, терĕмĕр. Çапла тунипе эпир хамăра хамăр куллен тĕрĕслесе пыма пултартăмăр, кам та пулин вырăнлă тумасан, ăна çавăнтах астутарса тепĕр хут ĕçлеттернĕ. Çавăнпа та пирĕн колхозăн каснă чухне те, турттарнă чухне те пĕр брак та пулмарĕ...

«Сталинцы» колхоз членĕсем районта пуринчен малтан вăрман касса хатĕрлемелли тата турттармалли плана ăнăçлă тултарса Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕç.

К. НАМАНГАН.

Çĕрпӳ районĕ.

Стахановла ĕçре

ВĂРНАР. Хштăр вăрман участокĕнчи рабочисем йывăç касса хатĕрлемелли плана уйăхран уйăха, кварталтан квартала ирттерсе тултараççĕ.

Октябрь уйăхĕнче куçса çӳрекен электростанципе план тăрăх 1.500 кубометр йывăç касмалла пулсан, 3.383 кубометр касса хатĕрленĕ.

Участок коллективĕ ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче те хастарлă ĕçлерĕ.

Тăваттăмĕш кварталта 4.500 кубометр йывăç хатĕрлемелле пулнă пулсан, декабрĕн 28-мĕшĕ тĕлне 6.800 кубометр каснă.

Стахановла ĕçлекен рабочисем пысăк ĕçукçи илеççĕ. Николай Семенов моторист уйăхсерен 1.800—1.900 тенкĕ ĕçлесе илет.

— Сезонти вăрман касса хатĕрлемелли плана январь уйăхĕнче ирттерсе тултаратпăр, Тăван çĕршыва пиншер кубометр йывăç хатĕрлесе паратпăр,—теççĕ рабочисем.

А. КОНДРАТЬЕВ,
вăрман участокĕнчи мастер.

Рабочи поселоксене электрификациленĕ

Вăрнар вăрманпромхозĕн Пĕнерпе Можауш участокĕсенчи рабочисем çĕнĕ çула хаваслă кĕтсе илчĕç. Участоксем 1951 çулхи производство планне ăнăçлă тултарнă.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче каçхине рабочисен хваттерĕсене, обществăллă çуртсене Ильич лампочкисем çутатма тытăнчĕç. Поселоксене электрификациленĕшĕн рабочисемпе служащисем тата вĕсен çемйисем савăнаççĕ.

Н. ДЕНИСОВ.

Ачасен Гайдар ячĕпе тăракан библиотеки çумĕнче литература кружокĕ иккĕмĕш çул ĕçлет. Библиотека заведующийĕ Л. Н. Тихонова ертсе пыракан кружока шкул ачисем юратса çӳреççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: кружок занятийĕ.

М. ЕГОРОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Шкул ачисен хĕллехи каникулĕ

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ хĕллехи каникул вăхăтĕнче пионерсемпе шкул ачисен-йĕлтĕрçĕсен заочнăй ăмăртăвне ирттерме йышăнчĕ. Çамрăк йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне «Пионерская Правда» хаçат ячĕпе ирттереççĕ. 1952 çулхи январĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче йĕлтĕрпе тата конькипе ярăнас тĕлĕшпе шкул ачисен республикăри ăмăртăвне ирттерме палăртнă. Ун пек ăмăртусем малтан районсемпе хуласенче пулса иртмелле.

Нумай пионер дружинисенче ăмăртусене лайăх хатĕрленеççĕ. Сăмахран, Красноармейски районĕнчи Карайри çичĕ çул вĕренмелли шкулти пионерсем пурте заочнăй ăмăртăва хутшăнма йышăннă. Вĕсем хăйсен вăйĕпе каток тунă, йĕлтĕр çулĕсем хывнă. Халĕ вĕсем йĕлтĕрпе çӳреме хăнăхас тĕлĕшпе занятисем ирттереççĕ. 3—5-мĕш классенче вĕренекенсем каникул вăхăтĕнче пĕрле пухăнса йĕлтĕрпе тата конькипе ярăнаççĕ, вăйăсем выляççĕ. Аслăрах классенче вĕренекенсем БГТО значокĕн нормине пама хатĕрленеççĕ.

Пионерсемпе шкул ачисем каникул вăхăтĕнче республикăри чемпионсемпе тата рекордсменсемпе, лайăх йĕлтĕрçĕсемпе, конькипе ярăнакансемпе, лайăх гимнастсемпе е акробатсемпе тĕл пулаççĕ. Пионерсемпе шкул ачисем валли спорт темисем тăрăх докладсемпе лекцисем ирттерме палăртнă.

Экскурсисемпе походсем ирттерни те ачасен канăвне йĕркелес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Чылай шкулсем, комсомол организацийĕсемпе пионер дружинисем экскурсисем ирттереççĕ, пионерсем музейсенче, колхозсемпе МТС-сенче, предприятисенче пулаççĕ. Куславкка районĕнчи Куспарти ача çуртĕн воспитанникĕсем, Тĕрлемесри, Елчĕкри, Кунерти çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчи пионерсемпе шкул ачисем çуртсем тăвакан завода экскурсие каяççĕ. Канаш хулинчи шкул ачисемпе пионерсем ялсенчи хăйсен тусĕсем патĕнче пулаççĕ. Хулари пионерсен пĕр ушкăнĕ Вырăскас Пикшихри вăтам шкулта пулать. Хулари шкул ачисем ялти вĕренекенсене концертсем лартса параççĕ, дружина ĕçĕпе, колхоз хуçалăхĕпе паллашаççĕ.

Чăваш академи театрĕ Шупашкар хулинчи ачасем валли ятарласа «Жить всегда», вырăс драма театрĕ «Иван да Марья», «Молодой человек» ятлă спектакльсем лартма хатĕрленнĕ. Çамрăксен театрĕ «Девочка ищет отца» спектакле Атăл леш енчи тата Кӳкеçри ачасен çурчĕсенче, Çĕрпӳ, Чурачăк, Шăхасан районĕсенчи шкулсенче лартса парать. Куçса çӳрекен театр коллективĕ пионерсемпе шкул ачисене «Правда о его отце» спектакль лартса парать.

Учительсен коллективĕсем, комсомол организацийĕсем каникул вăхăтĕнче ачасен художествăллă пултарулăхне ӳстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тума палăртнă. Чкаловски районĕнчи шкулсем, сăмахран, каникул вăхăтĕнче шкул ачисен художествăллă пултарулăх олимпиадине ирттереççĕ. Пионер дружинисем художествăллă пултарулăх каçĕсем, лайăх вулакансемпе юрлакансен, ташлакансен, кĕвĕ калакансен конкурсĕсене ирттереççĕ.

Каникул вăхăтĕнче уйрăмах шкул ачисене кино кăтартас ĕçе лайăх йĕркелени кирлĕ. ВЛКСМ хула комитечĕсемпе райкомĕсен тата кинофикаци пайĕсен пионерсемпе шкул ачисене совет халăхĕн аслă çулпуçĕсем çинчен, вырăссен паллă ученăйĕсемпе полководецĕсем çинчен тата халăх демократи çĕршывĕсенчи ӳсĕмсем çинчен калакан кинокартинăсем кăтартас ĕçе йĕркелемелле.

Тăван çĕршыври паллă çынсемпе, Верховнăй Совет депутачĕсемпе, Совет Союзĕн Геройĕсемпе, Социализмлă Ĕç Геройĕсемпе, предприятисемпе колхозсенчи паллă стахановецсемпе, наукăпа искусство работникĕсемпе тĕл пулни шкул ачисен ăс-тăнĕнче нумайлăха юлать. Улатăр хулинчи 5—10-мĕш классенче вĕренекенсем январĕн 5-мĕшĕнче Пĕтĕм Союзри миршĕн тăракансен 3-мĕш конференцийĕн делегачĕпе Юрăсова юлташпа тĕл пулаççĕ. Январĕн 9-мĕшĕнче вĕсем пăравуссем юсакан заводри аслă инженер докладне итлеççĕ, атă-пушмак тăвакан фабрикăри паллă стахановкăпа Варгина юлташпа, пăравуссем юсакан заводри çамрăк токарьпе Аблизин юлташпа тĕл пулаççĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Филиппова юлташ Куславккари вăтам шкулти, Тĕмшерти тата Воробьевкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчи пионерсемпе тĕл пулма кăмăл тунă.

Ачасен каникулне лайăх ирттересси—пысăк ĕç. Учительсен, комсомолецсен çак ĕçе ирттерес тĕлĕшпе шкулсенчи пионер вожатăйĕсене ытларах пулăшас пулать. Ачасен канăвне йĕркелес тĕлĕшпе уйрăмах комсомол организацийĕсем хăйсен пуçарулăхне анлă кăтартма тивĕçлĕ.

Н. ЕГОРОВ.

Çĕнĕ обязательство

ИШЛЕЙ. «За коммунизм» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе районта малта пырать. Вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пур енĕпе те ирттерсе тултарнă. Çав вăхăтрах выльăхсен тухăçлăхне те чылай ӳстернĕ. Колхоз правленийĕ (председателĕ М. Степанов юлташ) выльăхсен ăратлăхне лайăхлатассишĕн пысăк ĕçсем туса ирттерет. Халĕ сысна ферминче 180—200 килограмм таякан сыснасем курма пулать. Чăхсен ăратлăхне лайăхлатнă май вĕсенчен 1951 çулта планпа пăхнинчен чылай ытларах çăмарта илнĕ.

Иртнĕ çура колхозра строительство ĕçĕ анлă саралма пуçларĕ. Кĕркуннеччен типовăй пысăк ĕне вити туса пĕтернĕ, кивĕ витесене тĕплĕн юсаса лартнă. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли апат кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ.

Колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана срокчен чылай малтан тултарнă тата аванс шучĕпе 1952 çулшăн 1.070 килограмм сысна ашĕ, 477 килограмм ытти йышши ашкакай, 6.936 литр сĕт панă. Кунсăр пуçне колхоз 1951 çулта кооперации урлă государствăна 32 пин литр сĕт сутса «ГАЗ-51» маркăллă груз турттармалли автомашина туяннă.

Çак кунсенче сĕт-çу ферминче ĕçлекенсем, Совет Союзĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен примерĕ тăрăх, выльăхсене тĕрĕс-тĕкел пăхса усрас, вĕсен тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе социализмлă обязательствăсем илчĕç. Ферма работникĕсем: дояркăсем В. Любимовăпа Т. Суркова, скотницăсем Е. Щербакова, Х. Сармосова, З. Егорова тата телятницăсем Н. Шмелевăпа Х. Филиппова хăйсене çирĕплетсе панă 40 ĕнене тата икĕ вăкăра лайăх пăхса усрама, кашни ĕнерен пăру илсе вĕсен виçине кашни кун 450 грамран кая мар хутшăнтарса пыма пулаççĕ. Выльăхсене апата кирлĕ пек вĕтетсе, пĕçерсе тата рацион тăрăх çитерме, зооветеринари правилисене пурнăçласа пыма, кашни ĕнерен 1952 çулта 1.400 литртан кая мар сĕт суса илме сăмах параççĕ.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ «За коммунизм» колхозри сĕт-çу ферминче ĕçлекенсен пуçарăвне ырларĕç, ытти колхозсенче те çакăн пек тума тивĕçлĕ решени йышăнчĕç.

Х. ЛИСИН.

Художествăллă пултарулăх кружокĕсенче

СОВЕТСКИ. Колхозсенчи, шкулсенчи, культурăпа çутĕç учрежденийĕсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсем час-часах хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз хорне çитмĕл çулхи Павел Трофимов колхозник ертсе пырать. Хор репертуарĕнче совет композиторĕсен, Совет Союзĕнчи халăхсен юррисем нумай. Буденный ячĕпе тăракан тата «Восход» колхозсенчи хорсем те ăста юрланипе палăрса тăраççĕ.

Кăçал Тури Ачакри драма кружокĕ ĕçлеме пуçланăранпа вăтăр пилĕк çул çитет. Çак вăхăт хушшинче кружок çĕршер постановка панă. Вăл «Нарспи», «Ялта», «Сухра» пьесăсене пысăк ăсталăхпа выляна. «Мир вăрçа çĕнтерет» темăпа хатĕрленĕ монтаж уйрăмах пысăк ăнăçлăхпа иртнĕ. Çак кунсенче драмкружок «Савнă тусăм, хура куçăм» пьесăна кӳршĕри ялсенче лартса пачĕ.

Этмен, Чемей тата Çухра вулав çурчĕсенчи драмкружоксем час-часах спектакльсем лартса кăтартаççĕ.

Советски вăтам шкулĕнчи хор кружокĕ, музыкăна юратакан М. Кузьмина ертсе пынипе, культура суртĕнче темиçе хутчен те концертсем панă. Хор уйрăмах Сталин çинчен, Тăван çĕршыв çинчен хунă юрăсене ăста юрлать.

Постановкăсем умĕн яланах лекцисемпе докладсем пулаççĕ.

Плана срокчен тултарнă

Сюктерти йывăç комбиначĕ иртнĕ çулхи производство планне октябрĕн 27-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле вăл планран ирттерсе 800 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Социализмлă ăмăртура хăма суракан тата столярнăй цехсем малта пыраççĕ. Вĕсем плана уйăхран-уйăха 120—135 процент тултараççĕ.

1952 çулта комбинат коллективĕ тата пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешет.

Промартель пысăкланать

КОМСОМОЛЬСКИ. Çĕнĕ Мăратри «Заря» промысла артель 1951 çулхи плана ирттерсе тултарчĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент йӳнетнĕ. Артель 19 тĕслĕ тавар туса кăларнă. Уйрăмах чăпта çапас, урапа, урапа кустăрми, çуна, урапа тукăлĕсем, сĕтел-пукан тăвассине, пура пурассине лайăх йĕркеленĕ.

Сĕтел-пукан, урапа-çуна тăвакан цехсем çулталăкри плана 110—115 процент тултарнă.

Артель тĕрекленсе пырать. Урапа-çуна тăвакан цех валли çĕнĕрен çурт тунă, автомашина туяннă, гараж туса лартнă.

1952 çулта артелĕн продукци тата ытларах туса кăлармалла. Авса пукансем тăвакан цех, сушилка усма, ĕçе электрификацилеме, йывăртарах ĕçсене механизацилеме палăртнă.

Н. ИВАСОВ.

Библиографи

Чăваш литературин хрестоматийĕ

Иртнĕ хутра эпир И С. Тукташăн вăтам шкулăн VIII—IX-мĕш класĕсем валли çырнă «Чăваш литературин» учебникĕ çинчен сăмах хускатнăччĕ. Халĕ вăтам шкулăн VIII-мĕш класĕ валли Ф. Шапошниковпа Н. Васанкка пухса хатĕрленĕ хрестомати*) çинчен каласшăн.

Хрестоматин кăçалхи изданине иртнĕ изданипе танлаштарсан çакă палăрать: хрестоматире теориллĕ статьясемпе рецензисене кăларса пăрахнă, ун вырăнне писательсем çинчен калакан биографиллĕ кĕске сведенисем ытларах кĕртнĕ. Çавăн пекех халăх творчестви текен уйрăмра та хăшпĕр произведенисене кăларса пăрахнă, вĕсем вырăнне çĕнĕрен хушнă. Акă, тĕслĕхрен, иртнĕ изданири юрăсене («Атте пахчи», «Пирĕн мĕнпе мухтанас», «Чун хурланнă вăхăт», «Хусантан тухакан» тата ытти те) кăларса пăрахнă. Ун вырăнне çĕнĕ изданире ĕç юррисене («Чăпта çапакансен юрри», «Сӳс тыллакансен юрри», «Пир çапакансен юрри»), «Туй каччисен юррисене» т. ыт. те кĕртнĕ. «Куç пăвакан», «Улăп», «Уйăх çинчи хĕр», «Карчăк юрри», «Хуран кукли», «Пугачев çинчен», «Сарри паттăр», «Йăван уйĕ» юмахсене хушса пичетленĕ.

Лирикăллă юрăсене пурне те кăларса пăрахма кирлĕ пулман. Çавăн пекех рабочисен юррисене, бурлаксен юррисене хăвармалла пулнă. Çанталăка сăнаса калакансем (приметы) пирки те çавнах каламалла.

Пословицăсемпе поговоркăсенчен тата тупмалли юмахсенчен чылайăшне улăштарнă е хушнă. Пословицăсемпе поговоркăсем иртнĕ изданире пĕр страница кăна йышăннăччĕ, çĕнĕ изданире вара вĕсем икĕ страница йышăнаççĕ. Хрестоматин ку изданинчи пословицăсемпе поговоркăсем пурте И. Н. Юркин 1902—1910 çулсенче ĕлĕкхи Чĕмпĕр кĕпĕрнинче пухнисем. И. Н. Юркин пурнăçа тарăн пĕлменни тата унăн шухăшĕсем вак буржуази ăнланăвĕн калăпăшĕнчен тухайманни пирĕншĕн паллă ĕнтĕ. Ăна эпир унăн литературăллă творчестви тăрăх лайăх пĕлетпĕр. И. Н. Юркин пухнă пословицăсемпе поговоркăсенчен чылайăшĕсем ĕçхалăхĕн шухăш-кăмăлĕсемпе килĕшсе тăмаççĕ, мĕншĕн тесен халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен творчествине пухас ĕçре те вăл буржуаллă объективизм çулĕ çинче тăнă.

Акă хăшпĕр тĕслĕхсем.

«Пытă шăмă кăшлать, чухăн хăйĕн пуçне кăшлать» (32 стр.) Паллă ĕнтĕ, ĕççыннисен шухăшĕ мар ку. Ĕççынни чухăна йытăпа танлаштарма пултарайманни пĕр сăмахсăрах паллă ĕнтĕ.

«Сурăх ылханни кашкăра çитмен, чухăн ылханни пуяна витмен»—Чăнахах та, сурăх кашкăра темĕн чухлĕ ылхансан та, кашкăр сурăхăн тирне сĕвме пăрахмасть. Апла пулсан, чухăнăн та, пуяна ылханма кирлĕ мар иккен? Ан ылхан пуяна, ан кĕреш пуянпа—пурпĕрех вăл усăсăр япала,—тенине пĕлтерет вĕт ку!

Кĕнекене пухса хатĕрлекенсен халăхсен сăмах вĕççĕн çӳрекен творчестви класлă обществăра класлă характерлă пулнине яланах асра çирĕп тытмалла. Ĕççыннисен шухăш-кăмăлĕсене, ĕмĕчĕвĕсемпе ĕмĕчĕсене кăтартакан произведенисемсĕр пуçне, Октябрьти Социализмлă Аслă революциччен кулаксен, эксплуататорсен «фольклорĕ» те пулнă. Ĕççыннисем ун пек «фольклора», паллах, йышăнма пултарайман, йышăнма мар—вĕсене хирĕç ĕçхалăхĕ хăйĕн произведенийĕсемпе ответленĕ. Пурнăçра халиччен пулнă обществăсен историйĕ вăл классен кĕрешĕвĕн историйĕ, тенĕ К. Маркспа Ф. Энгельс. Халăх творчестви те çавнах кăтартса парать. В. И. Ленин буржуаллă обществăра кашни наци культуринчех икĕ тĕрлĕ культура пурри çинчен калать. Çак сăмахсем вĕсем халăх творчествине те тӳрремĕнех пырса тивеççĕ.

Чăваш халăх творчествинче ĕçхалăхĕн чăн-чăн шухăш-кăмăлĕсене кăтартса паракан пословицăсемпе поговоркăсем нумай. Хрестоматие вĕсене кĕртме кирлĕ пулнă.

Хрестоматие çĕнĕ изданипе кăларнă чухне хăй вăхăтĕнче патша цензури Тайăр Тимккин «Чаплă вилĕм юрри» ятлă сăввинчен кăларса пăрахнă пĕр строфана калле кĕртес пулать, мĕншĕн тесен поэт цензура кăларса пăрахнă строфара ĕççыннисем хăйсен телейлĕ пурнăçне кĕрешӳре кăна тупма пултарасси çинчен калать, ĕççыннисен «ырлăхăра вăрçса илме» чĕнет.

> «Акă эпир вилнĕ пек,
> Сын ырлăхĕшĕн вилĕр.
> Ун пек вилĕм пулмĕ тĕк,
> Ырлăхăра вăрçса илĕр!».

Çавăн пекех ситес изданире Тайăр Тимккин тепĕр сăввинчи («Çĕнĕ çул») пăсса пичетленĕ вырăнсене те, Н. Н. Полоруссов-Шелепин «Çĕлен» сăввине те юсаса пичетлес пулать.

Хрестоматири çакнашкал çитменлĕхсене те асăрхаттарса хăварас пулать.

Кĕнекен 3-мĕш страницинче «Халăх сăмахлăхĕ çинчен калаписем» ятлă уйрăм пур. Кунта халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен творчестви çинчен В. И. Ленин, А. М. Горький, А. С. Пушкин каланă сăмахсене кĕртнĕ. В. И. Ленинăн «Это—подлинное народное творчество, такое нужное и важное для изучения народной психологии в наши дни»,—текен вырăна И. С. Тукташăн «Чăваш литератури» учебникĕнче (редакторĕ И. Т. Васанкка) çапла куçарнă: «Ку вăл—чăн-чăн халăх творчестви, эпир пурăнакан кунсенче халăх психологине вĕренме кирлĕ паха творчество» (7 стр.). Хрестоматире вара ăна тепĕр майлă куçарнă: «...Вăл (халăх сăмахлăхĕ) халăхăн чăн-чăн творчествине, пирĕн кунсенче халăх психологине тĕпчесе пĕлмелли питех те кирлĕ, паха япала»,—тенĕ. Çавăн пекех А. М. Горький каланă сăмахсене те учебникре пĕр тĕрлĕ, хрестоматире тепĕр тĕрлĕ куçарса панă. Учебникри куçарнисем оригинала сывăх тăраççĕ. Паллах, пĕр издательство кăларнă икĕ кĕнекере пĕр текста икĕ тĕслĕ пичетлесе кăларни килĕшӳллĕ мар ĕнтĕ.

Çĕнĕ изданире «Ĕç юррисем» текен уйрăма (7 стр.) «Ака-суха юррисене» те кĕртсе янă. Анчах çак юрăсем йăла поэзине кĕреççĕ.

Кĕнекере йăла поэзийĕпе лирикăллă юрăсене те уйăрса паман. Хрестоматие кĕртнĕ «Хăна юррисем», «Ĕлĕкхи салтак юррисем», «Удел хресченĕсен юррисем», «Çĕн çĕре каякансен юррисем» текен уйрăмсенчи юрăсене «Лирикăллă юрăсем» тесе пĕр пысăк пая пĕтĕçтермелле пулнă. Çав пая вара уйрăм пĕчĕк ушкăнсене уйăрма кирлĕ пулнă.

Çакна калас пулать: чăваш литературине вĕрентмелли «Вăтам шкулăн программисене» çирĕплетнĕ Чăваш АССР Çутĕç министерстви те айăплă кунта. Ку ыйтăва «Программăсем» те татса памаçха. «Юрăсем. Вĕсен тĕслĕхĕсем (ĕç, уяв, туй, ташă, салтак юррисем). «Удел хресченĕсен юррисем»,—тенĕ программăн 65-мĕш страницинче. Паллах, ку çитмĕлĕксĕр. Лирикăллă юрăсем çинчен программăра уйрăммăн кăтартса парас пулать.

Хрестоматире юмахсем чылай пысăк вырăн йышăннă. Вĕсене жанр тăрăх уйăрса пама тăрăшнă. Анчах вĕсем пурте революциччен хи юмахсен чи лайăх тĕслĕхĕсем пулса тăраççĕ теме пултараймастпăр. Сăмахран, кĕнекере «Пикепе Хăрхăм» ятлă асамлă юмаха пичетленĕ. Анчах вăл çав ушкăна кĕрекен юмахсемшĕн характерлă мар. Асамлă юмахсенче час-часах тĕл пулакан тĕп герой вăл—Иван (Ухмах Йăван е Кукша Йăван). Вăл хăйĕн тăшманĕсене, тĕрлĕрен йывăрлăхсене çĕнтерсе, яланах çиеле тухса пырать. Асамлă юмахсенче тĕл пулакан геройсем ĕçхалăхĕн оптимизмне, халăх хăйĕн пусмăрçисене, социальнăй танмарлăха пĕтерессишĕн кĕрешнине кăтартса параççĕ.

Тĕрлĕ юмахсем çинчен каласнă чухне тата çакна та асăрхаттарса хăварма кирлĕ: юмахсем хăйсен идейи, чĕлхи, художествăллă мастерлăхĕ енчен тем пек лайăх пулсан та, ĕлĕкхи хресченсен тавракурăмĕ çителĕксĕр пулнине асра тытас пулать. Хресченсем юмахсенче «лайăх патша» пулассă шаннине, уйрăм çын харпăр хăй интересĕшĕн ытларах тăрăшнине куратпăр эпир.

«Куç пăвакан» юмах Октябрьти революци хыççăн çуралса тухнă. Çавăнпа та ăна революциччен хи халăх творчествипе пĕрле пама кирлĕ пулман.

Çак çитменлĕхсем вĕсем пурте хрестоматие хатĕрлекенсем хăйсен ĕçне тĕплĕн тăрăшса туманнинчен килнĕ. Учебнике тепĕр хут тӳрлетсе пичетленĕ чухне çак çитменлĕхсене пĕтерес пулать.

Н. ЛЮБИМОВ.

*) Чăваш литератури. Хрестомати. Вăтам шкулăн VIII-мĕш класĕ валли. Ф. Шапошниковпа Н. Васанкка пухса хатĕрленĕ. Редакторĕ Я. Ухсай. Чăвашгосиздат, Шупашкар, 1951 ç. 164 стр.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

Берут президент çĕнĕ çул ячĕпе Польша халăхĕ патне янă послани

ВАРШАВА, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çинче Польша республикин президенчĕ Болеслав Берут çĕнĕ çул ячĕпе Польша халăхĕ патне янă послани пичетленсе тухнă. Иртнĕ çул итогĕсем çинчен Берут çапла каланă:

Эпир çĕнĕ общественнăй строй тăвакан ĕçре пулса тăратпăр. Пирĕн хисепланă задачăсем çакăн пек: çĕнĕ общественнăй строй тумалла, социализм туналли чи ырă шухăшсене пурнăçламалла, Польша халăхĕ яланах никама пăхăнмасăр пурăнмалла туса хума тăрăшмалла, халăхсем хушшинчи мире тата вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнассине çирĕплетмелле.

Совет Союзĕнчи рабочисемпе хресченсен примерĕпе, Совет Союзĕнчи халăхсем тăванла пулăшса пынипе Польша Халăх Республикинчи ĕçсынни массисем çак ырă шухăш-ĕмĕтсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Иртнĕ çулталăкра çĕршыва индустриализацилес тĕлĕшпе 1950 çулхинчен нумай пысăкрах задачăсем тăчĕç. Халăх хуçалăхĕн пĕрлешÿллĕ секторĕнче иртнĕ çулталăкра 25 миллиард злотыйлăх капитальнăй ĕçсем тунă. Çав ĕçсене пурнăçлама 1947—1949 çулсем валли тунă виçĕ çуллăх планра палăртнинчен те нумайрах укçа-тенкĕ панă. Юлашки виçĕ çул хушшинче Польша халăх хуçалăхне юсама тата аталантарма укçа-тенкĕ нумай панă, пысăк ĕçсене пурнăçланă. Капитализмлă Польшăра экономика вăйлатма çавăн чухлĕ укçа-тенкĕ пани нихçан та пулман.

«Маршалл планне» йышăннă çĕршывсенче пачах та урăхла картина куратпăр. Çав çĕршывсене Америка халăхсен пурнăçне лайăхлатма «пулăшас шутпа» укçа-тенкĕ панă пек хăвать. Чăннипе çав «пулăшу» Франции, Италири тата Хĕвеланăç Европăри ытти çĕршывсенчи ĕçсыннисен мăйне пăвса лартакан пăвн пулса тăрать.

Капитализм пусмăрĕнчен хăтăлса тата империалистсене хирĕç мĕнле кирлĕ ĕçсем тума та çарса, Польша Халăх Республики пĕрмĕн-пĕр тĕрĕс çула, çăмăл мар çула суйласа илчĕ, халăх вăйне халăх хуçалăхне юсама тата аталантарма мобилизацилерĕ. Çак ĕçре аслă Совет Союзĕ пулăшса пычĕ.

Паян, экономикăна план тăрăх йĕркелесе пыма тытăннăранпа темиçе çул иртнĕ хыççăн, эпир хамăр çĕршыв хăватне çултан-çул ÿсĕ пыни çинчен хавасланса калама пултаратпăр.

Совет Союзĕпе тата унăн гениллĕ çулпуçĕ Иосиф Сталин ертсе пыракан тĕнчери мир лагерĕпе пĕрле Польша Халăх Республики миршĕн тата халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнассишĕн кĕрешекенсен пĕрлĕхĕ фронтĕнче çирĕп тăрать.

Пирĕншĕн, халăх демократийĕ ытти мĕнпур çĕршывсемшĕн те, çĕнĕ пурнăç тăвас, çĕршыва индустриализацилес, çĕнĕ техникăна усă курма вĕренсе çитес, экономика хăватне хăвăрт ÿстерес ĕçре Совет Союзĕн примерĕпе пулăшăвĕ çав тери паха. Пирĕн производительнăй вăйсем хăвăрт ÿссе пыни çĕршыв оборонине ăнăçлă тĕреклетсе пымалли условисем пулса тăрать. Çĕршыв оборонине тĕреклетни мире империалистсен çĕнĕ вăрçă пусарма хĕтĕртекенĕсен кирек мĕнле тапăннинчен те сыхлама май парать. Америка империализмĕ вăрçă-хурахла политика тытса пырать.

Вăл хăйне пăхăнса тăракан çĕршывсене ирĕксĕрлесе нумай хĕçпăшал хатĕрлеттерет тата тĕнчере çĕнĕ вăрçă пусарасшăн хăтланать. Çав хăрушлăха пирĕн пĕр минутлăха та куçран вĕçертмелле мар. Америка протекторачĕ пулса тăракан Хĕвеланăç Германире çĕнĕ çар туса хĕçпăшаллантарма тытăнни, гитлерла çар преступникĕсене тĕрмерен кăларни, тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕринпе тунă договорсене пăсни, иртнĕ вăрçăра парăнтарнăшăн [illegible] çинчен эпир пĕр минут та манмастпăр. Хамăр вăйсене миршĕн, хамăр ултă çуллăх плана пурнăçлассишĕн кĕрешме пирĕн мĕнпур вăйсене мобилизацилесе ĕçе тата тимлĕрех туса пырас пулать. Çак кĕрешÿре эпир хăватлă, çĕнтерÿллĕ Совет государствипе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе пĕрлешсе тăванла союз туни ăнланса илни, миршĕн кĕрешме паян этемлĕхĕн питĕ пысăк пайĕ пĕрлешнине ăнланса илни пирĕн халăхăн пĕрлĕхне çирĕплетмелле, кулленхи ĕçре ăна вăй-хăват парса тăмалла.

Эпир Польшăна индустриализацилемелли историллĕ тата аслă ултă çуллăх планăн малтанхи икĕ çулĕнчи задачисене ăнăçлă пурнăçларăмăр тата ирттерсе пурнăçларăмăр. Эпир ултă çуллăхăн виççĕмĕш çулне кĕретпĕр. Çак çул вăл плана çĕнтерÿллĕн пурнăçлас ĕçре татăклă улшăну тумалли çул пулать.

Президент хăйĕн посланийĕнче ултă çуллăхăн виççĕмĕш çулĕн задачисене ăнăçлă тултарма мĕнле конкретнăй задачăсене пурнăçламалли çинчен каласа панă.

Румыни халăхĕ пысăк ÿсĕм тунă çулталăк

Румынин Аслă Наци пухăвĕ президиумĕн председателĕ К. Пархон çĕнĕ çул ячĕпе Румыни халăхĕ патне янă послани

БУХАРЕСТ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни Халăх Республикин Аслă Наци пухăвĕ президиумĕн председателĕ К. Пархон академик ĕнер çĕнĕ çул çитнĕ ятпа Румынири ĕçсыннисем патне послани янă. Унта çапла каланă:

Пирĕн ĕç халăхĕшĕн иртнĕ çулталăк хамăр государство пурнăçĕн пур облаçĕсенче те пысăк çитĕнÿсем тунă çул, социализм тăвас тĕлĕшпе мирлĕ ĕçе пултарулăн туса пынă çул пулчĕ.

Хамăрăн аслă тус тата пире ирĕке кăларакан Совет Союзĕ пур енĕпе те тăванла пулăшса пынипе, халăх демократи çĕршывĕсемпе çирĕп тусла пулнипе тата килĕштерсе ĕçлесе пурăннипе Румыни кунтан-кун çĕнелсе, пысăк промышленноçлă тата аталанса пыракан ял хуçалăхлă малта тăракан çĕршыв пулса тăрать.

Пирĕн çĕршывра социализмăн аслă стройкисене тăваççĕ. Дунайпа Хура тинĕс хушшинче канал, Бикказра В. И. Ленин ячĕпе тăракан гидроэлектростанци, полиграфи промышленноçĕн «Дом Скынтейи» текен комбинатне, машинăсем тăвакан промышленноçпа электротехника промышленноçĕн çĕнĕ предприятийĕсене тата ытти нумай стройкăсене тăвас ĕç анлă сарăлнă.

Ĕçсыннисем хушшинче стахановецсемпе производствăра малта пыракансем нумай палăрчĕç. Çакăнтан пирĕн ĕçсыннисен ăнлавлăхĕ ытларах та ытларах ÿсĕ пыни, вĕсем ĕç çине çĕнĕлле, социализмла пăхни курăнса тăрать.

Румыни халăхĕ çĕршыв халăх хуçалăхĕн пур облаçĕсенче те çитĕнÿсем тунине тата ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланса пынине палăртса, Пархон çапла каланă:

Пĕтĕм тĕнчери мире тата пирĕн кунран-кун лайăхланса пыракан пурнăçа Англипе Америка империалисчĕсем хăратса тăраççĕ. Вĕсем ирĕклĕ халăхсене пусмăра кĕртсе ÿкересшĕн тата эпир халĕ мĕн тăватпăр, çавсене пурне те çĕмĕрĕксен кунисем туса хурасшăн. Анчах Совет Союзĕ ертсе пыракан мир вăйĕсем çултан-çул ÿссе тĕреклеççĕ. Миршĕн пыракан хăватлă юхăма тĕнчери çĕршыв миллион çынсем хутшăнчĕç. Вĕсене кĕрешÿре мир ялавне çÿлте тытса пыракан аслă Сталин сăмахĕсем хавхалантарса тăрать. Ĕçсыннисем мире сыхласа хăварас ĕçе хăйсен аллине илме тата ăна çитичченех хутĕлесе тăма хатĕр.

Çĕнĕ çулта эпир çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем тăвăпăр. Хамăр тăрăшса ĕçленипе, партии ертсе пынипе, Совет Союзĕ, пирĕн атте тата учитель И. В. Сталин пулăшса пынипе эпир хамăр умра тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçласа пырăпăр. Румыни Халăх Республикине чечеклентерес тата çирĕплетес çулла малалла утас ĕçре эпир [illegible] ăнăçлă пулăпăр. Эпир пилĕк çуллăх плана пурнăçлассишĕн, социализмшăн, миршĕн, халăхсем ирĕклĕхĕпе тăванлăхĕшĕн тата тимлĕрех ĕçлĕпĕр, тата хытăрах кĕрешсе пырăпăр.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе

Болгари Халăх пухăвĕ президиумĕн председателĕ Г. Дамянов çĕнĕ çул ячĕпе тухса каланă сăмах

СОФИЯ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари агентстви çакăн çинчен пĕлтерет: 1952 çула кĕнĕ май Болгари Халăх пухăвĕ президиумĕн председателĕ Георгий Дамянов радио тăрăх Болгари халăхне саламласа сăмах каланă.

Аслă Совет Союзĕ ырă кăмăлпа пысăк пулăшу панипе пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем, Болгарири коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, 1951 çулта социализмăн экономикăпа культура тĕлĕшĕнчи никĕсĕсене хывас ĕçре пысăк çитĕнÿсем тума пултарчĕç, тенĕ Дамянов.

Промышленноçĕ иртнĕ çулта вăрçă умĕнхинчен виçĕ хут çурă ытларах продукци туса кăларчĕ. Пирĕн рабочи класс Совет Союзĕнчи пуян ĕç опычĕпе усă курма вĕренет, çав меслетсене пурнăçласа пырать, социализмла ăмăртса тата ударлă ĕçлессипе, рационализаторсен юхăмне анлă сарать.

Пирĕн ял хуçалăхĕ тĕпренех урăхланса çĕнелет. Çĕрĕç кооперативĕсем, машинăпа трактор станцийĕсем тата государство çĕрĕç хуçалăхĕсем ытларах та ытларах тĕреклене пыраççĕ. Ĕç хресченĕсем [illegible]. Иртнĕ çулталăкра эпир пирĕн çĕршыв историйĕнче халиччен нихçан пулман пысăк тухăçлă тырпул туса илтĕмĕр.

Рабочи класпа ĕç хресченĕсем хушшинчи тăванла союз ытларах та ытларах тĕрекленсе пырать.

Пирĕн халăхăн культури ÿссе пырать. Халăха пур енĕпе те аталанса пыма кирлĕ условисем пулса пыраççĕ.

Пирĕн çĕршыв социализм тăвас çулпа хăватлăн çĕкленсе пырассипе мире сыхласа хăварнишĕн килет. Болгари кашни гражданинĕн миршĕн кĕрешме активлă хутшăнас пулать. Миршĕн кĕрешес ĕçе аслă Совет Союзĕ тата мĕнпур прогрессивлă этемлĕхĕн çулпуçĕ И. В. Сталин юлташ ертсе пырать. Болгари кашни гражданинĕ Англипе Америка империалисчĕсем тата вĕсен Балканри агенчĕсем—çĕнĕ вăрçă пусарма тăрăшакансен юнлă планĕсене тăрă шыв çине кăларассишĕн тата путлантарса лартассишĕн кĕрешес ĕçе активлă хутшăнмалла.

Китай халăхĕн демократиллĕ йĕркесем тăвас ĕçри пысăк çитĕнĕвĕсем

ПЕКИН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Китай халăхĕ 1952 çула демократиллĕ йĕркесем тăвас ĕçри пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕ.

«Дунбэйчжунсуюхао» журнал çапла çырать: 1951 çулта мирпе демократи лагерĕн вăйĕсем пысăк çĕнтерÿ турĕç. Аслă Совет Союзĕнчи халăхсем вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăха ăнăçлă пурнăçларĕç, коммунизм строительстви фронтĕнче кăçал пысăк çĕнтерÿсем чылай турĕç.

Çак çĕнтерÿсем мирпе демократи лагерĕн вăй-хăватне ÿстерчĕç кăна мар, вĕсем тата мĕнпур çĕршывсенчи халăхсене ырă пурнăçăн малашлăхĕсене уçса пачĕç.

Статьяра çапла каланă: пĕтĕм тĕнчери халăхсем мире юратаççĕ тата вĕсен ăна хÿтĕлеме çителĕклĕ вăй пур. Пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тума чĕнсе калани çине паянхи куна 580 миллион çын ытла алă пуснă. Çакă вăл пĕтĕм тĕнчери халăхăн тăватăмĕш пайĕ ытла пулать. Иртнĕ çулталăкра Китай добровольцĕсемпе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн чаçĕсем Америкăпа Ли Сын Манăн агрессиллĕ çарĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене 455 пин çын ытла пĕтерсе тăкрĕç, Америкăн империалистла агрессорĕсен вăрçăри шухăш-ĕмĕчĕсене путлантарса лартрĕç, мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе Инçет Хĕвелтухăçĕнче пысăк ĕç турĕç.

1951 çулта Китай халăхĕ демократиллĕ йĕркесем тăвас енĕпе тĕрлĕ ĕçсене ăнăçлă пурнăçларĕ, пысăк çитĕнÿсем турĕ. Тибета мирлĕ йĕркепе ирĕке кăларнипе Китай континентне пĕтĕмпех ирĕке кăларас ĕçе туса çитерчĕ.

Культура енĕпе чылай пысăк çитĕнÿсем тунă.

Китай халăхĕн пурнăçĕ лайăхланнă. Çапла, Çурçĕр Хĕвелтухăç Китайра пурăнакан кашни çын, вăтамран илсен, халĕ пĕлтĕрхинчен икĕ хут нумайрах, 1949 çулхинчен икĕ хут çурă нумайрах тавар туянма пултарать.

Совет халăхĕпе Китай халăхĕ хушшинчи туслăх çирĕпленсе пыни Çĕнĕ Китай тăвас тата пĕтĕм тĕнчери мирпе демократие сыхлас ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. 1951 çул Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх малалла çирĕпленсе тата аталанса пынипе паллă пулса тăнă. Китайпа Совет Союзĕн туслăх обществи членĕсен йышĕ 17 миллион çынна çитнĕ, 1950 çулта çак обществăра 3.040 пин çын члента тăнă пулнă.

Статьяра çапла каланă: эпир Сталинпа Мао Цзе-дун саманинче пурăнатпăр, ку вăл—калама çук пысăк телей. Америка империализмĕн çĕнĕ вăрçă пусармалли киревсĕр ĕмĕчĕсене путлантарса лартма пирĕн вăй çителĕклĕ, эпир империалистсен ирсĕр шухăш-ĕмĕчĕсене путлантарса лартма пултарассине шанса тăратпăр. Пирĕн социализмпа коммунизм çулĕпе пĕрмаях малалла кайса пыма вăй çителĕклĕ, эпир çав çулпа малалла кайса пырассине шанса тăратпăр.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç халиччен хи вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçнă, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтернĕ.

Хĕвеланăçĕнчи фронтра Халăх çарĕн чаçĕсем Соеньпхендо тата Тэеньпхендо утравĕсене тăшманран тасатнă. Çав утравсем Корейăн хĕвеланăçĕнчи çыранĕ çывăхĕнче. Малтанлăха илнĕ сведенисем тăрăх, Халăх çарĕн чаçĕсем Ли Сын Ман çарĕн икĕ баталйонне пĕтĕмпех аркатса тăкнă, 170 винтовка ытла, 5 пулемет, 3 радиоустановка, 156 ещĕк патрон тата ытти çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

Кунсăр пуçне, Халăх çарĕн чаçĕсем тăшманăн моторлă икĕ карапне тата десант антармалли 20 карапне тытса илнĕ. Тэеньпхендо утравĕ патĕнче Ли Сын Ман салтакĕсене тиенĕ темиçе карапа шыва путарнă, çав карапсем тарма хăтланнă пулнă.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсен отрячĕсем тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ, унччен çав самолетсем Муньчхоньри, Аньбеньри тата Сукчхоньри мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахнă çĕре хутшăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай Халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле фронтăн уйрăм участокĕсенче хăшпĕр вырăнсенче çапăçаççĕ, Америкăпа Англи агрессорĕсен çарĕсен тата Ли Сын Ман çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсене, техникине нумай пĕтереççĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсен отрячĕсем тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ, унччен çав самолетсем çĕршывăн хĕвелтухăçпе хĕвеланăçĕнчи çыранĕсенчи хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ çĕре хутшăннă пулнă.

Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусем

ПЕКИН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Паян, çĕнĕ çул пуçланнă кун, Корейăри перемири çинчен калаçнă çĕрте кун йĕркин виççĕмĕшпе тăваттăмĕш пункчĕсене пăхса тухакан подкомитетсен ларăвĕсем пулнă. Корея Халăх çарĕпе Китай добровольцĕсен делегачĕсем халиччен калаçса татăлаймасăр юлнă ыйтусене йĕркелеме, çапла майпа хăвăртрах перемири çинчен килĕшÿ тума чĕннĕ.

Кун йĕркин виççĕмĕш пунктне пăхса тухакан подкомитетăн ларăвĕнче пирĕн делегат: ООН çарĕсен командовани делегацийĕн хăйĕн юрăхсăр требованине—Çурçĕр Корейăра çĕнĕ аэродромсем тума тата кивисене юсама чарас тата Корейăн шалти ĕçĕсене хутшăнмалли йĕрке тăвас тĕлĕшпе кăларса тăратнă требование пăрахăçламалла, ООН çарĕсен командованийĕн делегацийĕ çав юрăхсăр требование пăрахăçласан, вара ытти хирĕçÿсене те пысăк чăрмавсемсĕрех тата хăвăрт йĕркелеме май килĕччĕ, тенĕ.

Кун йĕркин тăваттăмĕш пунктне пăхса тухакан подкомитет ларăвĕнче пирĕн делегат: подкомитетăн перемири çинчен килĕшÿ туса алă пуснă хыççăн тыткăнри çар çыннисене пурне те хăвăрт ирĕке кăлармалли принципа халех йышăнас пулать, тенĕ. Тыткăнри çар çыннисем çинчен çырнă сведенисене делегацисем пĕрпĕрне памалли çинчен калас пулсан, эпир хамăр патăмăрти тыткăнри çар çыннисем çинчен пур сведенисене те тăратрăмăр, тепĕр енĕ халиччен тăратнă сведенисем çителĕксĕр, вăл çавсем çумне хушса çĕнĕ сведенисем тăратассине эпир кĕтетпĕр. Тепĕр енĕ пирĕн çарсем тыткăна илнĕ ытти çар çыннисем çинчен пĕлтерме ыйтать пулсан, кун пирки эпир темиçе, хутчен те ăнлантарса патăмăр ĕнтĕ, тыткăна илнĕ çар çыннисен пысăк пайне эпир çапăçу хирĕнчех ирĕке кăларнă. Анчах та эпир, ку тĕлĕшпе, май килнĕ таран, пур материалсене те тĕрĕслеме тата çав сведенисене пĕр-пĕринпе улăштарса илме хатĕр, тенĕ вăл.

Икуо Оямăна миршĕн кĕрешнĕшĕн тĕнчери сталинла премие памалла тунă хыççăн

ШАНХАЙ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, Японири хаçатсем Оямăна тата миршĕн кĕрешекен ытти деятельсене тĕнчери сталинла мир премине памалла туни çинчен пĕлтерекен хыпарсене пысăк заголовоксемпе тата курăнмалли вырăнта пичетленĕ. хаçатсенче премии илме тивĕçлĕ пулнă çынсен биографийĕсемпе портречĕсене пичетлеççĕ.

«Совьет ньюс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Оямăна сталинла премии памалла туни çинчен калакан хыпара профсоюзсен организацийĕсемпе демократиллĕ хаçатсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ. Японири чылай профсоюзсемпе демократиллĕ организацисен представителĕсем тата нумай çынсем Оямăна чунтан-чĕререн саламланă.

«Кова Симбун» хаçатра Ояма çĕнĕ çул ячĕпе çырнă çырăва пичетленĕ Унта вăл миршĕн кĕрешес ĕçе вăйлатма кирлине палăртать. «Халăх миршĕн кĕрешсен, вăл вăрçа сирсе яма пултарать. Эпир çĕнĕ çула лайăх çулталăк тума тăрăшсан, вăл ырă çул пулма пултарать», тенĕ Ояма. Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсем текенскерĕн салтакĕсем США-ран ултă пин миля хушши инçетри вырăнта, Корейăра вăрçаççĕ. Çав вăхăтрах Корейăпа Китай салтакĕсем хăйсен тăван çĕршывĕшĕн хытă çапăçаççĕ, паллах ĕнтĕ, вĕсем вăрçăра çĕнтерĕç, тенĕ Ояма. Хĕçпăшалсăрланмалла тăвассишĕн тата Пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тутарассишĕн кĕрешес ĕçе вăйлатма кирлине палăртса, Ояма Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешесси вăйланнине, тĕнчери пур çĕршывсенче те, çав шутра США-ра та, миршĕн кĕрешес вăйăм вăйланса пыни çинчен каланă.

Японипе Китай Халăх Республикин экономика тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе çыхăну тытма кирли çинчен каланă Ояма. Вăл Япони США-на пăхăнса тăнă пирки пысăк йывăрлăхсем тухса тăнине палăртнă.

Юлашкинчен Ояма Япони халăхне çĕршывра фашизма хирĕç кĕрешме чĕннĕ.

Швецири ĕççыннисен пурнăçĕ начарланнă

СТОКГОЛЬМ, январĕн 1-мĕшĕ (ТАСС). 1951 çулта Швецири ĕççыннисен пурнăçĕ чылай начарланнă 1952 çулта вĕсен пурнăçĕ татах та начарланассине халех кĕтеççĕ.

Иртнĕ çулталăкра апат-çимĕçпе япаласен хакĕ тата налогсем пĕрмаях ÿссе пынă. Демократиллĕ хаçатсем пичетленĕ сведенисем тăрăх. Швецире вăтам пурăçпа пурăнакан çемье 1950 çулта апат-çимĕç туянма 2 765 крона пĕтернĕ, 1951 çулта унăн апат-çимĕç туянма 3.332 крона укçа тухнă. Вăтам пурăнакан çемьен топливо туянма тухакан расхочĕсем 1950 çулхинчен 146 крона ытларах пулнă, тумтирпе атă-пушмак туянма 313 крона нумайрах укçа пĕтнĕ 1951 çулта хваттер укçи те чылай ÿснĕ.

Раштав кунĕсенче тата çĕнĕ çул çитнĕ тĕле пир-авăр, атă-пушмак тата апат-çимĕç промышленноçĕсенчи пиншер рабочисем ĕççĕр тăрса юлнă Вĕсене предприятисене «вăхăтлăха» чарса лартнă пирки ĕçрен кăларнă Предприятисене вара чĕр тавар çитменнине тата туса хатĕрленĕ таварсене туянакансем çуккине пула чарса лартнă. Промышленноçа ертсе пырас ĕçри хăшпĕр представительсем: çĕнĕ çулта промышленноçăн гражданла отраслĕсенче ĕçлекен рабочисен тепĕр пайне ĕçрен кăлармалла пулать, теççĕ.

Швеци правительстви вăрçа хатĕрленме укçа-тенкĕ нумай расходлать. Çĕршыв çар бюджетне калама çук нумай ÿстернĕ. 1949—1950 бюджет çулĕнче çар, валли 973 миллион крона расходланă пулсан, хальхи бюджет çулĕнче мĕнпур расходсен 20 процентне яхăн вăрçа хатĕрленес ĕçе каять.

Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе суту-илÿ тăвас ĕçе вăйлатассишĕн

ПАРИЖ, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Франци халăхĕн тĕрлĕ сийĕсем хушшинче Франци Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе суту-илÿ тăвас ĕçе вăйлатассишĕн тăракансен юхăмĕ вăйланса пырать.

«Юманите» хаçат Роанн хулинчи (Луара департаменчĕ) хут фабрикин дирекцийĕпе комитечĕ, Клермон-Ферран хулин (Пюи-де-Дом департаменчĕ) муниципальнăй совечĕ, Марсельри сунăнь завочĕсен комитечĕ Франци правительстви умне çавăн пек требованисем кăларса тăратни çинчен çырать.

«Рено» завочĕн директорĕ Лефоше: «Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемпе суту-илÿ тăвас ĕçе йĕркелес тенине эпĕ килĕштерĕп, Рено национализациленĕ предприятийĕсем суту-илÿ тăвас ĕçе хăвăртрах йĕркелеме пулăшас тĕлĕшпе мĕн тума май килнине пĕтĕмпех тăвĕç», тенĕ.

Çĕнĕ çул кунĕ Шупашкарта

Декабрĕн 31-мĕшĕ, хĕллехи тĕттĕм каç. Ĕç кунĕ пĕтнĕ хыççăн хулан тĕп урамĕсем халăхпа тулчĕç. Автобуссем чарăнакан вырăнсенче пассажирсем нумай тăраççĕ. Такси машинăсем пĕр чарăнмасăр çÿреççĕ, кашни ĕççынни çĕнĕ çула тулли сĕтел хушшинче тулли кăмăлпа кĕтсе илме хатĕрленет.

Совет çыннисен телейлĕ те хаваслă пурнăçне кăтартакан ĕлка илемлĕн курăнать. Чи çÿлте Хĕрлĕ Çăлтăр инçене курăнмалла çутатать.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем çĕнĕ çула мирлĕ ĕçпе, çирĕп мир туса хурассишĕн ырми-канми кĕрешнипе кĕтсе илеççĕ. Çакна ĕлка çинче «Эпир миршĕн» тесе çырнă сăмахсем те уççăн кăтартса параççĕ.

Кĕçех 12 сехет. Сывлăша, тĕттĕм каça çутатса, хĕрлĕ, симĕс, кăвак ракетăсем пĕрин хыççăн тепри ыткăнаççĕ.

Çурçĕр иртни пĕр сехет. Кремль куранчĕсем шăп 12 çапаççĕ, радио Мускавра çĕнĕ çул çитнине пĕлтерет. Мускав кашни ĕççыннине çĕнĕ çул çитнĕ ятпа саламлать. Мĕн тери пысăк савăнăç, мĕн тери пысăк телей те хавас! Сана Тăван çĕршыв столици, аслă Сталин пурăнакан хула саламлать.

Пур çĕрте те савăнăç, хаваслăх. Çĕршыв çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕ.

Январĕн 1-мĕшĕ, çĕнĕ çул кунĕ. Хулари ĕççыннисем аслă уяв чухнехи пек савăнăçлă та хаваслă. Кинотеатрта пулакан ирхи сеанссенче халăх туллиех, художество галлерейинче Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн Н. К. Сверчков художникăн произведенийĕсен выставки ĕçлет. Выставкăна пырса куракансем нумай.

Пионерсен çуртĕнче ирхине кĕçĕн классенче вĕренекенсем валли ĕлка пулчĕ. Кунта çĕршор ача пуçса ĕлка тавра ташласа савăнчĕç, çĕнĕ çул парнисем илчĕç.

Чылай учрежденисемпе предприятисенче ачасене çĕнĕ çул парнисем панă, çак кун «Çĕнĕ çул ячĕпе салам!» тесе çырнă пакетсем йăтнă, савăнăçлă ачасене кашни урамра, кашни килте курма пулнă

Н. МИНИН.

Çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕç

Шупашкар районĕнчи çыхăну работникĕсем çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕç.

Толик Хураски çыхăну уйрăмĕ 1951 çулхи производство планне Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарса, январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 110,5 процент тултарчĕ, планран ирттерсе государствăна тупăш чылай туса пачĕ.

Çак çыхăну уйрăмĕнче ĕçлекен Суворов ячĕпе тăракан колхоз почтальонĕ Е. Яковлев юлташ 1951 çулхи задание 104 процент, вăл шутра, хаçат-журнал сармалли задание 130 процент тултарчĕ. Суворов ячĕпе тăракан колхозра кашни колхозник килне хаçат-журнал килсе тăрать. Çавăншăн Е. Яковлев юлташа «Отличник-почтальон» значок тата 150 тенкĕ укçа парса премилерĕç.

Кÿкеçри çыхăну кантурĕнче ĕçлекен В. Васильева, Е. Федорова, А. Иванов юлташсем те ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕç. Телеграфистка В. Васильева 1951 çулхи плана 125 процент тултарса виçĕ специальноçа вĕренчĕ.

Ф. МАРКОВ.

Хĕрлĕ кĕтес

Йĕпреç районĕнчи «Заря» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем вăрман хуçалăхĕнче воскресник туса ирттернĕ. Ĕçлесе илнĕ укçапа çамрăксем колхозра хĕрлĕ кĕтес йĕркелерĕç. Хĕрлĕ кĕтес валли радиоприемник, шашка, шахмат тата домино, илемлĕ плакатсем туяннă, хаçат-журнал çырăннă.

Хĕрлĕ кĕтесе халĕ кашни каçах колхозниксем, çамрăксем нумай пухăнаççĕ. Кунта час-часах политикăллă калаçусем пулса иртеççĕ. Колхозниксем пĕрле пухăнса радио итлеççĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Культурăллă пурнăç хроники

Çĕнĕ гидроэлектростанци. Пăрачкав районĕнчи «Трактор» колхозра çĕнĕ гидроэлектростанци туса пĕтерсе ĕçе ячĕç. Колхозниксем çĕнĕ çула килсемпе урамсене тата обществăллă çуртсене Ильич лампочкисем çутатнипе кĕтсе илчĕç.

Çамрăксен каçĕсем. Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Кипекри вулав çуртĕ час-часах çамрăксен каçĕсене ирттерет. Унта çамрăксем лекцисемпе докладсем итлеççĕ, çĕнĕ кĕнекесене вуласа çÿтсе яваççĕ.

Çак кунсенче пулнă çамрăксен каçĕнче В. Григорьев учитель «Туслăхпа юлташлăх» темăпа доклад туса пачĕ.

Клуб лайăх ĕçлет. Ухманти клуб хăйĕн ĕçне кунтан-кун лайăхлатса пырать. Вăл ĕççыннисен юратнă вырăнĕ пулса тăчĕ.

Кино кăтартассине лайăх йĕркеленĕ. Колхозниксем юлашки вăхăтра «Стальной солдат», «Свет в Коордии», чăвашла кусарнă «Ылтăн Çăлтăр кавалерĕ» кинофильмсене курчĕç.

Ответлă редактор М. Н. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ял хуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НГ 01202 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.